4795

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи КУЛЬТУРĂПА ÇУТĔÇ УПРАВЛЕНИЙĔН
ЛЕКЦИ БЮРОВĔ

# ЧУБАЙ ЯЛ КЛУБĔ ÇУМĔНЧИ ЛЕКТОРСЕН ГРУППИН ĔÇĔСЕМ



ШУПАШКАР — 1950

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи КУЛЬТУРĂПА ÇУТĔÇ УПРАВЛЕНИЙĔН
ЛЕКЦИ БЮРОВĔ

*ЛЕКТОРСЕНЕ ПУЛĂШМА*

# ЧУПАЙ ЯЛ КЛУБĔ ÇУМĔНЧИ ЛЕКТОРСЕН ГРУППИН ĔÇĔСЕМ

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР
Абонем. экз. № 25.

ШУПАШКАР — 1950

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палате
25 января 1951 г.
№ 66

## ЛЕКЦИЛЛЕ ПРОПАГАНДĂНА АНЛĂН ТУСА ПЫРАР

Ялта, ĕç çыннисем хушшинче, наука пĕлĕвĕсене сарас тĕлĕшпе лекцилле пропаганда пысăк вырăн йышăнать.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Наукăпа çутĕç пропагандине организацилесси çинчен» йышăннă постановленире çапла каланă: «Ĕç çыннисен анлă массисен культура тĕлĕшĕнчи шайне ӳстерес тата культурăсăрлăхпа тĕшмĕшлĕхе пĕтерес ĕçре наука пĕлĕвĕсене сарса пыни хальхи вăхăтра паха та пысăк вырăн йышăнса тăрать». ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ идеологи ыйтăвĕсем çинчен йышăннă постановленисене ăнăçлă пурнăçласа пырас тесен, лекцилле пропагандăна анлăн туса пыни кирлĕ. Ялти ĕç çыннисем хушшинче лекцилле пропагандăна куллен туса пырас тесен, çак ĕçе ялти интеллигенцие — учительсене, медицина работникĕсене тата ял хуçалăх специалисчĕсене явăçтарни калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Лайăх ĕçлекен лекторсен групписем ялти интеллигенцие лекцисемпе докладсем тăвас ĕçе анлăн явăçтарнинe пула халăх хушшинче эрнере пĕр хутран кая мар лекцисем ирттереççĕ.

Пирĕн республикăра, район центрĕсенче, районти культура çурчĕсем çумĕнче 29 лектори, вулав çурчĕсемпе ял клубĕсем çумĕнче 303 лекторсен групписем ĕçлеççĕ. Нумай лекторсем халăх хушшинче вулакан лекцисене тĕплĕн хатĕрленсе, пысăк идейăлăхпа тата килĕшӳллĕ ирттереççĕ. Сăмахран, Муркаш районĕнчи Кашмашри ялти лекторинче 10 лектор ĕçлет. Вĕсем ултă уйăх хушшинче пурĕ 24 лекци вуланă. Колхозниксем кашни эрнерех ял клубне пухăнса тĕрлĕ темăсемпе лекцисем итлеççĕ. Колхоз агрономĕ Ф. В. Васильев юлташ «Шăрăх çанталăкран сыхламалли вăрман тăрăхĕсем», «Тăпрана лайăхлатасси» темăсемпе колхозри бригадăсенче 4 хутчен лекци вуланă. Шкул директорĕ Г. Р. Романов юлташ «Совет халăхĕн мораллĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ», «Коммунистла мораль» темăсемпе час-часах лекцисем вулать. Çавăн пекех

Л. И. Перлова учительница ирттерекен лекцисене те колхозниксем пысăк интереспа итлеççĕ.

Етĕрне районĕнчи Кăташри ял лекторийĕ те лайăх ĕçлет. Лекторсем ăслăлăх, ял хуçалăх, литература тата тĕне хирĕç ыйтусемпе лекцисем вуласа колхозниксен культурине ÿстерес тĕлĕшпе пысăк ĕç тăваççĕ. Акă, К. А. Канарейкин лектор «Çутçанталăка улăштарса çĕнетмелли сталинла план», «Нумай уйлă пусă çаврăнăшĕ», «И. П. Павлов — вырăссен паллă ученăйĕ», «Çанталăк улшăнасси мĕнрен килет» темăсемпе лекцисем ирттерне, çак лекцисене колхозниксем кăмăлласа итленĕ.

Куславкка районĕнчи Варасăр ял клубĕ çумĕнчи лекторсен группи колхозниксем хушшинче пысăк авторитетлă, колхозниксем ыйтнине вăл лайăх пурнăçласа пырать. Кунта çакăн пек ĕç пулнă: колхозниксем çурçĕр шевлине курнă, уйрăм çынсем çак явлени мĕнрен килнине пĕлмен пирки, тĕрĕс мар ăнланнă. Лекторсен группи, çакна шута илсе, «Çутçанталăкри хăрушă явленисем çинчен» темăпа лекци вуласа панă. Çак лекцире çурçĕр шевли мĕнрен килнине те каласа ăнлантарнă.

Лайăх ĕçлекен лекторсен групписем тата уйрăм лекторсен ĕçĕ пирки татах та нумай калама пулать. Ун пек тĕслĕхсем Çĕрпÿ районĕнчи Анат Кипекçĕри, Елчĕк районĕнчи Патрекелри ял клубĕсем çумĕнчи лекторсен групписенче те пур. Патрекел ял клубĕ çумĕнчи лекторсен группин лекторĕ А. Н. Енейкин колхозниксем хушшинче лекци вулассине хăйĕн хисеплĕ ĕçĕсенчен пĕри тесе шутлать, вăл яланах наука ыйтăвĕсемпе лекцисем вулать.

Хальхи вăхăтра ял хуçалăх наукин çитĕнĕвĕсене тата вăйлă тырпул мастерĕсен опычĕсене колхозниксем хушшинче сарса, вĕсене çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарасси — чи паха та ответлă задачăсенчен пĕри пулса тăрать. Лекторсен ял хуçалăхĕнче малта пыракансем хăйсен çитĕнĕвĕсене ял хуçалăх наукине пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пынипе кăна тума пултарни çинчен колхозниксене ăнлантарса памалла. Ял хуçалăх специалисчĕсен тата вăйлă тырпул мастерĕсен колхозниксем хушшинче вăхăтран вăхăта кăна мар, яланах лекцисемпе докладсем туса памалла, каласусем ирттермелле.

Вăрмар районĕнчи Чупай ял клубĕ çумĕнчи лекторсен группи çапла тăвать те. Кунта лекторсен группинче учительсемсĕр, медицина работникĕсĕр тата агрономсăр пуçне, вăйлă тырпул мастерĕсем И. Г. Григорьев, В. Т. Ти-



Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗ В. Григорьева юлташ колхозниксене хӑй мӗнле майпа вӑйлӑ тырпул туса илни ҫинчен лекци вуласа парать.

мофеев юлташсем, С. В. Венедиктов, С. И. Галкин, В. Я. Яковлев тата ытти юлташсем те тăраççĕ. Юлашки вăхăтра кунта Социализмлă Ĕç Геройĕсем К. Н. Николаевпа В. С. Григорьева юлташсем те докладсемпе калаçусем ирттерме пуçларĕç. Вĕсем хăш чухне кӳршĕри колхозсене кайса унти колхозниксене хăйсен ĕçĕнчи опытсем çинчен каласа параççĕ.

Колхозниксем хушшинче ял хуçалăх науки тунă çитĕнӳсем тата вăйлă тырпул мастерĕсен ĕçри опычĕсем çинчен лекцисем вуласа пани мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине çак тĕслĕх те çирĕплетсе пама пултарать.

«Дружба» колхоз членĕ Социализмла Ĕç Геройĕ В. С. Григорьева юлташ çапла каласа парать: «Эпĕ ял хуçалăх ыйтăвĕсемпе пулса иртекен лекцисемпе докладсене тата вăйлă тырпул мастерĕсем çинчен ирттерекен калаçусене пĕр сиктермесĕр çӳрерĕм. Кунсăр пуçне, Чăваш республикинчи Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденĕллĕ колхозри тата Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри вăйлă тырпул туса чапа тухнă колхозниксем çинчен хаçатсемпе журналсенче çырнине вулаттăм. Вĕсем мана калама çук пысăк усă пачĕç. Эпĕ вара мĕн тусан тырпул тухăçне ӳстерме май пурри çинчен шухăшлама пуçларăм. Çав шухăшсем çинчен колхоз председательне И. Г. Григорьева тата колхоз агрономне Г. И. Иванова каласа параттăм. Вĕсем ман плана ырласа ăна мĕнле пурнăçламалли çинчен ăнлантарса пачĕç. Çапла ĕнтĕ, манăн ĕçри çитĕнӳсем ял хуçалăх наукипе вăйлă тырпул мастерĕсен ĕçĕсем çинчен тунă лекцисене тимлĕн итленинчен те нумай килчĕç».

Пирĕн ял клубĕсемпе вулав çурчĕсем çумĕнчи лекторсен групписем юлашки вăхăтра ял хуçалăх науки тунă çитĕнӳсем тата вăйлă тырпул мастерĕсен ĕçри опычĕсем çинчен лекцисем ытларах вулама тытăнчĕç. Тĕслĕхшĕн Çĕрпӳ районĕнчи Анат Кипекçĕри лекторсен группин ĕçĕсене илер. Юлашки виçĕ уйăх хушшинче кунта ял хуçалăх ыйтăвĕсемпе 10 лекци вуланă. Лекцисемпе докладсене ял клубĕнче кăна мар, колхозниксем ĕçленĕ çĕрте — уйхирте, авăн çапнă çĕрте, фермăсенче те вуланă. Куславкка районĕнчи Илепарти ял клубĕ çумĕнчи лекторсен группинче те юлашки вăхăтра ял хуçалăх наукин çитĕнĕвĕсем тата вăйлă тырпул мастерĕсен ĕçри опычĕсем çинчен эрнере пĕрререн кая мар лекцисем вулама тытăннă,



Чупай ял клубĕн заведующийĕ Н. Иванов юлташ агитаторсене колхозниксем хушшинче калаçу ирттерме хатĕрлет.

Халĕ ял хуçалăх наукин çитĕнĕвĕсем çинчен уйрăм лекцисем мар, цикллă лекцисем вулассине организацилемелле. Сăмахран, цикллă лекцисене çак темăсемпе вулама пулать: Çутçанталăка улăштарса çĕнетмелли сталинла план; Совет Союзĕнчи, республикăри е районти ӳсентăрансемпе тăпрасем; В. В. Докучаев, П. А. Костычев, В. Р. Вильямс комплексĕ; В. Р. Вильямс академик курăксем акса тумалли çĕрĕç системи çинчен вĕрентни; Уй-хире шыв çурса каяссинчен сыхласси; Колхозсенче уй-хире хӳтĕлемелли вăрман тăрăхĕсем лартса ӳстересси; Уяр çанталăкпа кĕрешесси; Кӳлĕсемпе шыв çыранĕсене, типĕ çырмасемпе варсене тата хăйăрлă вырăнсене йывăç лартса çирĕплетесси; Лартмалли çамрăк йывăçсем çитĕнтерме питомниксем организацилесси; Вырăнти çырмасемпе юханшывсене пĕвелесе кӳлĕсем тăвасси; Кӳлĕсемпе пĕвесем тăвас тата йывăç лартас ĕçсене механизацилесси.

Чупайри лекторсен группи иртнĕ уйăхсенче çакăн пек цикллă лекцисем иртнерĕ: Тăпрана культурăллă ĕçлесси; Тырпул тухăçне ӳстерес ĕçре минерал удобренисем мĕнле вырăн йышăнса тăраççĕ; Пысăк тухăçлă тырпул мĕнле туса илме пулать; Социализмла Ĕç Геройĕсем — вăйлă тырпул мастерĕсем; Социализмла çĕрĕçĕнче малта пыракансем хăйсен ĕçĕнчи опычĕсем çинчен каласа пани. Кунсăр пуçне, ял хуçалăх ыйтăвĕсем тăрăх партипе правительство йышăннă постановленисене сӳтсе явса вĕреннĕ.

Çӳлерех асăннă Чупайри лекторсен группи лекцисене клубра кăна вуласан, вĕсене ял Советĕнчи пур колхозниксем те итлеймен пулĕччĕç, çакна шута илсе, Чупайра лекцисене колхозри уй-хир бригадисенче вулассине те организациленĕ, çавна май лекцисен шутне ӳстерме тивнĕ.

Ялти лектори руководителĕ А. Мясникова юлташ каласа панă тăрăх, уй-хирти ĕçсене вĕçлесен, уй-хир бригадисенче, выльăх-чĕрлĕх фермисенче цикллă лекцисем çапла пулса пымалла:

У й-х и р б р и г а д и с е м в а л л и: Тăпрана тĕрĕс сухаласа сӳрени тата ытти ĕçсене тĕрĕс туни—вăйлă тырпул туса илмелли тĕп услови; Вăрлăха акма хатĕрлесси; Вырăнти тата минерал удобренисемпе усă курни—тырпул тухăçне ӳстерес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать; Кĕрхи тырăсен калчине пăхса çитĕнтересси; Ял хуçалăх культурисене çум курăкĕсенчен тасатни мĕнле вырăн йышăнса тăрать; Тырпула уяр çанталăкран сыхласси.



Вăйлă тырпул туса илнĕшĕн Ленин орденĕпе наградăланă И. Г. Григорьев юлташ „Дружба“ колхоз ĕçĕпе паллашма пынă колхоз председателĕсене „Дружба“ колхоз çитĕнĕвĕсем çинчен лекци вуласа парать.

Выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсем валли: Выльăх-чĕрлĕхе лайăх пăхни унăн тухăçлăхне ÿстерет; Выльăх-чĕрлĕхе кĕтÿре çÿретмелли çĕр лаптăкĕсем тата вĕсемпе усă курасси; Колхозри кайăк-кĕшĕке пăхса çитĕнтерессипе тата унăн тухăçлăхне ÿстересси; Ял хуçалăх выльăх-чĕрлĕхĕн чирĕсем, вĕсенчен сыхланасси тата вĕсемпе кĕрешесси т. ыт. те.

Çак кĕнекере эпир Вăрмар районĕнчи Чупайри лекторсен группин ĕçĕсем çинчен кĕскен каласа паратпăр. Паллах, лекторсен пĕрлешĕвĕн ĕçне кăтартнă чухне ял культури тата ялăн ÿсĕмĕсемпе çитĕнĕвĕсем çинчен каламасăр иртсе кайма май çук. Çавăнпа та хăш-пĕр вырăнсенче лекцилле пропаганда шутне кĕмен ĕçсем çинчен те чарăнса тăма тивет.

Чупайри лекторсен группин ĕçĕнче, паллах, хăш-пĕр çитменлĕхсем те пур. Анчах эпир вĕсем пирки питех чарăнса тăмасăрах лекторсен группин паха ĕçĕсене кăтартса парасшăн. Кунта вулакан лекцисен пахалăхĕ çакă пулса тăрать: вĕсем пурте тенĕ пекех колхозниксен кулленхи ĕçĕсемпе тата ыйтăвĕсемпе çыхăнса тăраççĕ, колхозниксене çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантараççĕ.

Лекторсен группин тепĕр паха енĕ вăл çакă: вăйлă тырпул мастерĕсем кунта 44 çын шутланаççĕ. Çак хăйсен ĕçĕпе чапа тухнă çынсен кашни сăмахĕ практикăри ĕçпе çыхăнса пырать. Анчах та вĕсенчен нумайăшĕ халиччен халăх хушшинче докладсемпе лекцисем туман. Пысăк опытлă лекторсем вара кунта çамрăк юлташсене докладсемпе лекцисен конспектне çырма кăна мар, вĕсене халăх хушшинче вулама та вĕрентеççĕ.

Чупайри лекторсен группин лекторĕ Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учительници А. Ф. Аристовская юлташ лекторсене мĕнле пăхса çитĕнтерни, вĕсене куллен мĕнле пулăшса пыни çинчен çапла çырать: «СССР Верховнăй Советне суйлама хатĕрленнĕ вăхăтра В. Я. Яковлевпа А. И. Теплов агитаторсем лайăх ĕçлерĕç, вĕсем суйлавçăсем хушшинче калаçусем ирттерме тĕплĕн хатĕрленетчĕç, калаçусене ăнланмалла ирттеретчĕç. Эпир вĕсене куллен пулăшса пытăмăр, çавна май вĕсен тавракурăмĕ те ÿсрĕ. Теплов юлташ халĕ пысăк мар докладсене хăех хатĕрленсе ирттерет. Кăçал вăл пурĕ 3 хутчен доклад туса пачĕ. Паллах, малтанлăха эпир Теплов юлташа конспект çырма вĕрентрĕмĕр, вăл çырнă конспектсене

пăхса тухса юсаттăмăр. Унтан вăл хăех хатĕрленсе докладсем те тума вĕренчĕ».

Пирĕн ĕç çыннисен культурăллă ыйтăвĕсем куллен ӳссе пыраççĕ. Колхозниксен çак ыйтăвĕсене тивĕçтерес тесен, пирĕн лекторсен те хăйсен пĕлĕвне, пултарулăхне тата мастерлăхне ӳстерессишĕн кĕрешмелле.

Лектор ĕçĕ — хисеплĕ те пархатарлă ĕç. Вăл наука, ял хуçалăх тата ытти пĕлӳсене халăх хушшине сарса, Ленин — Сталин партине ĕç çыннисене коммунистла воспитани пама пулăшать. Лектор — идеологи фрончĕн малти участокĕнче пыракан çын. Çавăнпа та кашни лекторăн ответлăха туйса ĕçлемелле, хăйĕн пĕлĕвне куллен ӳстерсе пымалла, лекцисене пысăк пахалăхпа ирттерме тăрăшмалла, итлекенсем панă ыйтусем çине тĕплĕн шутласа тĕрĕс ответ памалла. Лектор каланă кашни сăмах лекцие итлекенсемшĕн ăнланмалла, тарăн шухăшлă тата идея тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра пулмалла.

Пирĕн задача — ялсенчи лекторсен группisen тата лекторсен шутне ӳстересси, вĕсене ĕçре куллен пулăшса пырасси. Çавăнпа та лекторсен группisen ялти интеллигенцие лекцисем вулас ĕçе явăçтармалла.

Лекторсен хисепне ӳстернипе пĕрлех лекцисен пахалăхне ӳстерессишĕн те тимлĕн ĕçлемелле. Кашни лекторăн лекци текстне çырса хатĕрлемелле, çак текст тăрăх лекцие малтан лекторсен группинче вуласа памалла. Лекторсен группинчи юлташсен лекцири çитменлĕхсене палăртмалла, вĕсене мĕнле юсамаллине кăтартса памалла.

Çак кĕнекере эпир Чупайри лекторсен группин ĕçĕсем çинчен, вăл мĕнле майпа тата формăсемпе ĕçлени çинчен, ялти клуб, колхоз правленийĕ, ял Совечĕ, партипе комсомол организацийĕсем лекторсен группин ĕçне организацилеме пулăшни çинчен каласа парасшăн.

Çак кĕнеке ялти лекторсене мĕн чухлĕ те пулин пулăшсан — эпир хамăрăн тĕллев пурнăçа кĕчĕ, тесе шутлама пултаратпăр.

## ÇĔНЕЛНĔ ЯЛ

Чупайри ял клубĕ хăйĕн кулленхи ĕçне тĕрлĕ формăсемпе тата меслетсемпе туса пырать. Лекцилле пропаганда клуб ĕçĕнче тĕп вырăн йышăнать пулсан, тĕрлĕ массăллă мероприятисем ирттерни, сăмахран: çамрăк колхозниксемпе ватă колхозниксен тĕлпулу каçĕ, вулавçăсен конференцийĕ, ял хуçалăх выставки, вăйлă тырпул мастерĕсемпе колхозниксен тĕлпулăвĕ — çаксем вĕсем лекцисенче каланисене ăнланма пулăшаççĕ, колхозниксен тавракурăмне ÿстереççĕ.

Çакăн пек уйрăм мероприятисене колхозниксем хушшинче ялти клуб мĕнле туса пыни çинчен икĕ-виçĕ тĕслĕх илсе кăтартма пулать.

Кăçал июнь уйăхĕнче, пирĕн Чăваш республики 30 çул тултарнă май, ялти клуб Чупай ялĕ çак тапхăрта мĕнле çĕнелни, колхозниксен культури мĕнле ÿсни тата колхоз мĕнле çитĕнÿсем туни çинчен сахал мар докладсемпе калаçусем ирттернĕ. Çак ĕçе тума ялти интеллигенци, колхоз активĕ хастарлăн хутшăннă. Лекцисем ирттерни калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать пулсан та, вĕсене ытти мероприятисемпе, ватă колхозниксем, ялти паллă çынсем тухса каланипе пуянлатма кирлĕ. Çакна шута илсе, кунта тĕрлĕ вечерсем, тĕлпулусем туса ирттернĕ. Çак вечерсемпе тĕлпулусенчен хăшне-пĕрне илсе кăтартма пулать.

Чупай ялĕнчи «Дружба» колхозра 70 çулти колхозник Федор Алексеевич Алексеев пурăнать. Унăн сывлăхĕ лайăх, ăс-тăнĕ те çирĕп. Октябрьти социализмла революцичченхи пурнăçа вăл лайăх астăвать, патша саманинчи хĕн-хура хăй курса тата тÿссе ирттернĕ. 40 çула çитсен кăна вăл ликпункта çÿресе, хăйĕн хут пĕлменнĕхне пĕтернĕ, кĕнеке-хаçат вулама пултаракан çынсен ретне тăнă. Ялти клуб Чăваш республики 30 çул тултарнине уявлама хатĕрленнĕ тапхăрта çамрăк колхозниксемпе ватă колхозниксен тĕлпулу каçне ирттернĕ. Çак тĕлпулура

Ф. А. Алексеев юлташран Октябрьти Аслă социализмла революциччен Чупай мĕнле пулни çинчен каласа пама ыйтнă.

Федор Алексеевич хальхи колхозри пурнăçа чунтан чĕререн юратни, совет влаçĕ хыççăн кăна вăл çын хисепне кĕни çинчен тата ватă пулсан та колхоз ĕçĕнче хастарлăн ĕçлени мĕнрен килни çинчен каласа панă.

— Чупай ялне революциччен кĕтӳçсемпе тарçăсен ялĕ тетчĕç. Çапла калама пур енчен те май пулнă,— тет Алексеев юлташ.—Улăм витнĕ пĕчĕк пӳртсем хушшинче П. В. Муллин, Ф. И. Иванов, В. С. Семенов кулаксен тимĕр витнĕ çурчĕсем ларăрса ларатчĕç.

Юмахри нумай пуçлă çĕлен пек, тăсăлса авкаланса выртакан пилĕк типĕ çырма ишĕлсе уй-хире пăсатчĕç, ял çывăхне çитсен, вĕсем пĕрлешсе пĕр пысăк çырма пулса каятчĕç. Вăл кашни çулах çурхи шывпа аслăланса, сарăлса пыратчĕ, хресченсен пĕчĕк анисем çинчи тăпран çиелти сийне юхтара-юхтара каятчĕ. Çак çырма яла хĕвелтухăç енчен çултан çул хĕстеретчĕ. Çырмасем хушшинчи çĕре вара сухапуçпе сухаласа тата йывăç сӳрепе сӳрелесе, вăрлăха яланах алăпа акаттăмăр. Тăпрана вырăнти удобренисем тăкса çемçетмен, минерал удобренисем çинчен хресченсем илтмен те. Çакăн пек ĕçленĕ хыççăн эпир гектартан, тырă ăнса пулнă çулсенче те, нумай-нумай 5—6 центнер тырă пухса илеттĕмĕр. Эпир ыраш, сĕлĕ, пăри, хуратул, вир акаттăмăр. Тулă акса курман.

Пирĕн ял çывăхĕнче аслă вăрмансем çук, вутă çывăхра хатĕрлесси çинчен каламалли те пулман. Çавна пула хресченсем пурлă-çуклă тислĕкне те навус кирпĕчĕ (кизяк) туса çунтарнă тата ыраш улăмĕ хутса хăйсен пӳртне ăшăтнă. Унсăр пуçне, пӳрте хĕллехи вăхăтра ăшăтма çырма-çатрасенчен хытхура пухса хатĕрлеттĕмĕр. Хĕлле вара çак «вутта» хутса хамăрăн хура пӳртсене ăшăтма тиветчĕ.

Хура пӳрт çинчен каламасăр иртсе каяс килмест. Ун пек пӳртсем куçран çухални 25 çул çитет ĕнтĕ. Пĕчĕк кантăклă улăм витнĕ пӳрт. Кантăксăр пуçне, пӳрт стенине шăтарса тĕнĕ тунă. Мĕншĕн хура пӳрт тенĕ-ха çакна? Вут хутнă чухне тĕтĕм кăмакаран, мăръе çук пирки, тӳрех тӳпене кайман, пӳрте йăсăрланса тухнă. Вăл тĕтĕме вара пӳрт алăкне тата тĕнне ӳçса кăларса яма тивнĕ. Паллах, нумай çулсем хушши хутса пурăннă май пӳртĕн

шал енчи стенисем хăрăмланса хуралса кайнă. Çакăн пек хура пÿртсем пирĕн ялта, эпĕ астăвасса, 40 ытлаччĕ.

Мĕнпе çутатнă-ха пÿрте? Краççын лампи чухăн хресчен çуртне вăл пĕр 25—30 çул каялла кăна килсе кĕнĕ. Унччен кашни килĕрех хăйă çутса пурăннă. Çунакан хăйăа хĕстерсе хума ятарласа тунă хăйчикки пурччĕ, хăш чухне курăсран явса тунă кантра çунтараттăмăр.

Çакăн пек пурнăçра хут вĕренме е сывлăхлă пулма май пулманни каламасăрах паллă ĕнтĕ. Ахальтен мар Октябрьти социализмла революциччен пирĕн ялта вăтам шкултан вĕренсе тухни пĕр Павел Егорович Егоров кăна пулнă.

1914 çулта ялта пуçламăш шкул уçрĕç. Унта 20—25 ача вĕренетчĕ (пирĕн ялта ун чухне 250 кил пулнă). Вĕсенчен нумайăшĕ 2—3 çул вĕреннĕ хыççăн шкула çÿреме пăрахатчĕç.

Хресченсен килĕнче трахома, кăрчанкă (кĕçĕ), ÿпке чирĕ сарăлнăччĕ. Паллах, хура пÿртре сывлăхлă çын пулма çăмăл пулман. Суккăрланнă çынсем килĕрен тенĕ пекех пулнă. 40—50 çула çитсен, уйрăмах хĕрарăмсем, нумайăшĕ суккăрланнă.

Мĕнле культурăллă ĕçсем пулса иртнĕ-ха? Пухусем çĕр валеçес, куланай тÿлес ытти çавăн пек ыйтусемпе кăна пулатчĕç. Эрнене пĕрре чиркĕве каймалла, çулталăкне çичĕ эрнерен кая мар типĕ тытмалла. Çакна мĕнле пурнăçласа пынине Патти чиркĕвĕн пупĕ яланах асăрхаса тăнă. Мăнкун е ытти чиркÿ праçникĕсенче чиркÿрен таврăннă хыççăн хресченсем юлашки укçипе эрех илсе ĕçке тытăнатчĕç. Ун хыççăн ялта çапăçу тата ытти киревсĕр ĕçсем пуçланатчĕç. Çапла пулнă вăл вăхăтри «культура». Хресченшĕн урăхла культура пулман.

Маларах эпĕ Чупай ялне хĕвелтухăç енчен типĕ çырма-çатрасем хĕстерсе пыни çинчен каланăччĕ. Хĕвеланăç енче çĕмĕрт пек хура та мамăк пек кăпка тăпраллă уйхир сарăлса выртатчĕ, анчах ку енчен пирĕн яла Паттири Верин помещик хĕстерсе пыратчĕ,—вăл 125 гектар ытла пирĕн чи лайăх çĕре кастарса илнĕччĕ, унсăр пуçне, Иванов пуп 25 гектар çавăрса илнĕччĕ, ялти кулаксем теçак енчи çĕрпе усă куратчĕç. Çапла вара хĕвеланăç енчен пире пуянсем хĕстерсе пынă. Помещике, пупа, пирĕн ялти тата таври кулаксене хÿтĕлеме пирĕн ялтан тăватă çухрăмри Паттире земски начальник, старшина, 25 урядникпе стражник пурăнатчĕç.

Çак çĕр улпучĕпе кулаксен аллинче 27 гектар вăрман, улăх тата карас пулăллă пысăк кӳлĕ пурччĕ. Çăмăл мар пулнă хресчене пурăнма, тырри-пулли декабрь уйăхĕччен кăна çемьене тăрантарма çитнĕ, унтан ирĕксĕрех тарçа кайса кĕмелле пулнă. Тата çакна шута илĕр: ялта 100 хуçалăх ытла лашасăр пулнă. Уйрăм хуçалăхра пурăннă вăхăтра лашасăр хресчен — хресчен мар, вăл — тарçă.

Куланайне пурпĕрех тӳлес пулать, пуп кĕркунне, тырă пухса кĕртнĕ вăхăтрах, килĕрен 3-шер пăт тырă пухатчĕ. Вăхăтра куланай тӳлемесен суд хăвăрт тăваççĕ, урядникпе старшина килеççĕ, ăшалаççĕ саламатпа, юлашки çăкăрна е пурлăхна сутса та пулин куççулпе куланай тӳлетĕн.

Çапла пулнă революциччен Чупай, çавăн пек пулнă хресченсен пурнăçĕ. 1917 çулта Октябрьти Аслă социализмлă революци хыççăн Верин помещик тухса тарчĕ, Муллин, Семенов, Иванов тата ытти çавăн йышши кулаксене, колхоз тунă май, тĕпĕ-йĕрĕпех кăкласа тăкрăмăр та ялтан хăваласа ятăмăр. Вĕсен чухăнсен тарĕпе тата юнĕпе усă курса тунă пурлăхĕсене тытса илсе колхоза патăмăр. Çавăнтан вара колхозлă пурнăç пуçланчĕ. Паллах, малтанах колхоз хальхи пек çирĕп те пуян хуçалăхлă артель пулман, кун пек тăвассишĕн коммунистсем ертсе пынипе эпир, колхозниксем, сахал ĕçлемен.

Иртнĕ пурнăç çинчен сире, çамрăксене, каласа патăм. Вăл пурнăçа эпир текех курмăпăр. Унта хĕн-хур, асапнуша, пусмăрлăх. Халĕ эпир колхозра мĕнле пурăннине хăвăр куратăр, ун çинчен хăвăр калама пултаратăр. Эпĕ пĕр сăмах çеç каласшăн: хĕн-хуртан, асаплă пурнăçран пире çăлса кăларнă, пуян та культурăллă пурнăç патне илсе çитернĕ Ленин—Сталин партине чунтан-чĕререн тав тăватăп. Пирĕн аслă çулпуçăмăр, аслă Сталин сывă пултăр, пирĕн халăх телейĕшĕн нумай-нумай çул пурăнтăр!— тесе вĕçленĕ хăйĕн калавне Алексеев юлташ.

Унтан çамрăксем пĕрин хыççăн тепри туха-туха калаçнă, хальхи телейлĕ те савнăçлă пурнăç çинчен каласа панă.

Галина Александрова комсомолка Ф. А. Алексеев юлташ каласа панине аса илсе çапла каланă:

— Эпĕ патша саманине курман, ялта колхоз тунă çулсенче кăна çуралнă. Тăпрана сухапуçпе сухаланине курман, хура пӳрт мĕнлине пĕлместĕп. Анчах Федор Алексеевич асатте каласа панине ĕмĕрне те манас çук,

вăл каласа пани пире колхозра тата пикенерех ĕçлеме, колхоз пурлăхне, куç шăрçине сыхланă пек, сыхлама вĕрентет, татах та çĕнĕ çитĕнӳсем тума чĕнет,—тенĕ.

* * *

Авалхи Чупай вată колхозниксен асĕнче кăна юлнă. Халĕ Чупай—культурăллă та пуян колхозлă ял. Октябрьти Аслă социализмла революци тивлечĕпе Чупайри ĕç çыннисем, пирĕн çĕршыври мĕнпур халăхсем пекех, Сталинла Конституци панă аслă правăсемпе туллин усă кураççĕ. Кунта хура пӳрт мар, улăм витнĕ пӳртсем те çултан çул сахалланса пыраççĕ, хăма, тимĕр витнĕ çуртсен шучĕ ӳссе пырать. Колхозниксен çуртне, ял урамне, обществăллă çурт-йĕрсене электричество çутатать. Колхозниксен çуртĕнче радио калаçать. «Дружба» колхоз çирĕп те пуян колхоз. Тырпула машинăсемпе акаççĕ, машинăсемпе вырса пуçтараççĕ, машинăсемпе çапаççĕ. Колхозăн виçĕ автомашина пур. Электростанци, радиоузел, автогараж, пушар деповĕ т. ыт. те. Нумаях пулмасть, Мускавран килнĕ И. В. Батраков инженер-строителе эпĕ йышлă фотоӳкерчĕксем шутĕнче Чупайри «Дружба» колхоз правленийĕн çурчĕн ӳкерчĕкне кăтартрăм. Вăл манран:

— Ку район центрĕнчи пуштă кантурĕн çурчĕ-и?— тесе ыйтрĕ.

— Çук, ку «Дружба» колхоз правленийĕн çурчĕ, колхозăн хăйĕн телефон коммутаторĕ пур, правление 32 тĕлтен телефон пралукĕ пырса кĕрет. Кунта кашни бригадирăн, ферма заведующийĕсен, вăйлă тырпул мастерĕсен хваттерĕсене тата колхозри предприятисемпе обществăллă çурт-йĕрсене телефон кĕртнĕ,—тесе ăнлантартăм.

* * *

Чупайран хĕвелтухăç енчи, Федор Алексеевич калашлĕ, нумай пуçлă çĕлен пек çырмасене 10 тĕлтен пĕвеленĕ, унта тĕкĕр пек çутă шыв сарăлса выртать. Пĕвесенче карп тата карас пулă ĕрчетеççĕ. Çырма яланах ишĕлсе тăпран çиелти сийне юхтарса ан кайтăр тесе, 4 гектар ытла çĕр лаптăкне йывăç лартса çирĕплетнĕ. Пилĕк çырма пĕр çĕре пĕрлешекен вырăна халĕ электростанци çуртне тăваççĕ. Урамсем тăрăх лайăхлатнă çулсем тунă, колхозниксен пӳрчĕсем умĕпе 600 метр тăршшĕ ытла хулăн хăмаран тротуар сарса тухнă.

Чупай ял Советӗнчи ӗлӗк тарçӑсемпе кӗтӳçсем пулнӑ хресчен çемйисенчен совет влаçӗ вӑхӑтӗнче вӗренсе тухса тӗрлӗ ӗçре ӗçлекенсен шучӗ сахал мар. Чупай ял Советӗнче çуралса ӳснӗ, совет влаçӗ вӑхӑтӗнче вӗреннӗ çынсенчен 1 çын профессор, 3 çын доцент пулса ӗçлеççӗ. Аслӑ шкулсенчен вӗренсе тухнисем 44 çын, вӑтам шкул пӗтернисем 73 çын шутланаççӗ. Учительсем пулса 33 çын, врачсем — 2 çын, фельдшерсем—21 çын, Совет Çарӗн



„Дружба" колхозри вӑйлӑ тырпул мастерӗсем (сулахайран сылтӑмалла): малти ретре – М. И. Иванова, В. С. Григорьева, Е. Т. Матвеева; иккӗмӗш ретре – В. И. Антонов, В. Т. Тимофеев, И. Ф. Федоров.

офицерӗсем—26 çын, ял хуçалӑх специалисчӗсем—6 çын. Кунсӑр пуçне, Хусан, Юдино, Çӗрпӳ, Вӑрмар чугун çул станцийӗсенче ӗçлекен специалистсем вуншарӑн шутланаççӗ.

Ялта çичӗ çул вӗренмелли шкул, фельдшер пункчӗ, трахома пункчӗ тата ытти учрежденисем те пур.

Пилӗк çырма пӗрлешнӗ тӗлте, пулас электростанцие хирӗç, сӑртра, тимӗр витнӗ пысӑк çурт пур. Вӑл — ялти клуб. Клуб залӗнче 220 венски пукан, лайӑх йӗркеленӗ

сцена, 50 çын вырнаçмалăх читальня. Вуламашкăн 1200 ытла кĕнеке пур. 23 тĕрлĕ хаçат-журнал килсе тăрать.

Клуба юратса, килĕшӳллĕ йĕркеленĕ. Стенасем çинче — лозунгсемпе плакатсем, партипе правительство руководителĕсен портречĕсем, вĕсене пир çине сăрлă краскăпа ӳкернĕ.

«Дружба» колхоз членĕсем хушшинче вăйлă тырпул туса илнĕшĕн Социализмлă Ĕç Геройĕн ятне илнĕ икĕ колхозник, Ленин орденне илнĕ 8 колхозник, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденне илнĕ 4 колхозник, «Ĕçри хастарлăхшăн» медаль илнисем 8 колхозник, «Ĕçре палăрнăшăн» медаль илнисем 7 колхозник шутланаççĕ. Çапла вара, «Дружба» колхоз членĕсенчен 27 çын вăйлă тырпул пăхса çитĕнтернĕшĕн правительство наградине илнĕ. Çак колхозниксен ячĕсене ылтăн сăрăпа сăрланă рамка ăшне çырса хунă. Вăл клубра курăнмалла вырăнта çакăнса тăрать.

Клуб стенин пĕр енне «Мичурин—çутçанталăка улăштарса çĕнетекен çын, вырăссен аслă ученăйĕ» ятлă выставка тунă. Выставка вырăссен аслă ученăйĕ хăй ĕмĕрĕнче мĕн тунине тата унăн ученикĕсем мĕнле ĕçленине сăмахсемпе тата илемлĕ ӳкерчĕксемпе кăтартса парать.

Клубра ялан тенĕ пекех халăх нумай пулать. Клубăн вуламалли залĕнче, сăрланă вăрăм сĕтелсем хушшинче, колхозниксем кĕнеке-хаçат вулаççĕ. Акă, уй-хир бригадин бригадирĕ А. К. Забродин юлташ Вильямсăн «Основы земледелия» кĕнекине вулать, вуланине хăйĕн тетрачĕ çине çыра-çыра хурать. Клуб заведующийĕ Н. Иванов юлташ калана тăрăх, вăл, «Кĕрхи çĕртме» çинчен доклад тума хатĕрленет. Вăйлă тырпул туса илнĕшĕн Ленин орденĕ илме тивĕçлĕ пулнă Раиса Васильевна Шашкова юлташ «Физкультура и спорт» журнала тимлĕн вулать. Вăл ял Совет депутачĕ, ăна ял Совет исполкомĕн секретарĕ пулма уйăрса лартнă тата физкультурăпа спорт коллективĕсене ертсе пырас ĕçе йĕркелеме хушнă. Кунтах кĕнекесемпе хаçатсем вулаççĕ, Америкă агрессорĕсем хăш вырăнсенче мирлĕ халăхсене тапăннине пăхса картă çинче паллă тăваççĕ. Петров колхозник Сафоновăн «Земля в цвету» ятлă кĕнекине вуласшăн т. ыт. те. Кашниех хăйне кирлĕ ĕçе тăвать, пĕр-пĕрне кансĕрлемеççĕ, шавламаççĕ.

Клуб залĕнче хор кружокĕ концерта хатĕрленет. Çак кунсенче кунта правительство членĕ вăйлă тырпул

мастерĕсене орденсемпе медальсем пама килмелле. Çак чаплă та хисеплĕ ĕç хыççăн хор кружокĕ пысăк концерт парать.

Ялти лекторсен группин руководителĕ А. Н. Мясникова юлташ IV квартал валли ĕç планĕ тăвать.

Клубăн пĕр кĕтесĕнче, пĕчĕк сĕтелсем хушшинче, шахматла тата шашкăлла выляççĕ. Клуб кунта яланах тулли пурнăçпа пурăнать. Кашни колхозник хăйĕн пушă вăхăтне клубра ирттерет.

Клуб умне çăмăл автомашина çитсе чарăнчĕ. Колхоз председателĕпе агроном клубра ял хуçалăх выставки тăвас тĕлĕшпе хăш кĕтесе мĕнле экспонат вырнаçтарасси



„Дружба" колхозри вăйлă тырпул мастерĕсем (сулахайран сылтăмалла): В. А. Сидорова, Р. В. Шашкова.

çинчен вырăнта канаш тума килнĕ. Колхозра 6 уй-хир бригади, вĕсен кашнин уйрăм çитĕнӳсем пур, вĕсене пурне те пĕлсе вырнаçтармалла. Пулас выставкăн эскизĕ хатĕр. Халĕ экспонатсене вырнаçтарас тĕлĕшпе выставкăна хатĕрленекен комиссие кăтартусем памалла.

* * *

Авалхи Чупай ялĕ! 33 çул хушшинче сана совет çыннисем чăн та палламалла мар çĕнетнĕ. Ял кăна мар, кун-

та çыннисем те урăх çынсем. Вĕсем — социализмран майĕпен коммунизма куçса пыракан аслă Сталин эпохинче пурăнакан çынсем. Поэт калашле, революцичченхи Чупай чăвашĕнчен:

Халь чĕрĕлсе тăрас пулсан,
Колхозникрен çапла ыйтсассăн:
— Ял-йышăм мĕнле пурăнан,
Малалла эсĕ мĕн тăвасшăн?
Колхозник парĕччĕ ответ:
— Эпир халь пуринчен телейлĕ.
Вăл телей Ленинран килет,
Вăл халăхсен çута хĕвелĕ.
Çулпуçĕ Сталинпа пĕрле
Ильич ĕçне тăватпăр эпĕр
Çут коммунизм ĕмĕрне
Ленин çуттипеле кĕретпĕр.

**В. ЯСТРЕБОВ.**

## ПОЛИТИКĂЛЛĂ-МАССĂЛЛĂ ĔÇĔН РЕЗУЛЬТАЧĔСЕМ

Аслă Отечественнăй вăрçăччен «Дружба» колхоз районта чи кая юлса пыракан ял хуçалăх артелĕсенчен пĕри пулнă. Колхоз ял хуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туса пырайман. Колхозниксем хушшинчи ĕç дисциплини начар пулнă. Хăш-пĕрисем час-часах колхозра пикенсе ĕçлес вырăнне базарсене кайса суту-илÿ туса çÿренĕ, колхоз пурлăхне çаратма пăхакансем те пулкаланă. Колхоз ĕçĕнче çитменлĕхсем те сахал пулман.

Колхоз 1942 çулшăн государствăна 4 пин пăт ытла тырă, 6 пин пăт пахча çимĕçĕ, 420 пăт аш-какай парса татайман, акмалăх вăрлăх та хăварман. Колхоз общество выльăх-чĕрлĕхне ĕрчетес енĕпе те начар ĕçленĕ. Фермăра пурĕ те 5 ĕне, 37 сурăх, 67 сысна кăна пулнă. Вĕсене усрама та çурт-йĕр çитмен, çавăнпа общество выльăх-чĕрлĕхне колхозниксем патĕнче усранă. Çакăн пек сахал йышсăр выльăх-чĕрлĕх валли те çителĕклĕ таран апат хатĕрлеймен. Нумай çул ÿсекен курăксене хире акса туман.

Тырă тухăçĕ ытла та начар пулнă. Сăмахран, 1942 çулта гектартан вăтам шутпа 5,1 центнер кăна тырă пухса илнĕ. 7 çул хушши колхозниксем ĕçкунĕ тăрăх пĕр пĕрчĕ те тырă илеймен.

Уй-хире тислĕк, минерал удобрени кăларман, çĕртме сухине вăхăтра туман. Колхозниксем хушшинче агротехникăна вĕренес ĕçе йĕркелемен, политикăллă-массăллă ĕçе туса пыман.

Çапла вара, нумай çул хушши «Дружба» колхоз пур енĕпе те юлса пынин сăлтавне хăш-пĕрисем колхоз пысăккинче шыранă, унтан икĕ колхоз тума шутланă.

Эпĕ çак колхозра ĕçлеме тытăнсан, ман умма тĕрлĕ йывăрлăхсем тухса тăчĕç. Ун чухне колхозра пурĕ те 2 коммунист кăначчĕ, колхоз производствинче ĕçлекен комсомолецсем те çукчĕ.



„Дружба" колхоз председателĕ
Иван Григорьевич Григорьев.

Чи малтанах, эпĕ колхозра тӳрĕ кăмăлпа ĕçлекенсене канашлăва пухрăм. Вĕсене ĕç дисциплинине çирĕплетесси, колхоз пурлăхне упраса пысăклатасси, Ял хуçалăх артелĕн уставне пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пырасси çинчен каласа патăм. Çак тĕп задачăсене пурнăçласан кăна колхоза çирĕплетме май пурри çинчен ăнлантартăм. Колхозниксем хушшинче Ял хуçалăх артелĕн уставĕ çинчен тата политика ыйтăвĕсем тăрăх кашни бригадăра докладсемпе лекцисем тума тытăнтăмăр, уйрăм колхозниксем хушшинче те массăллă ăнлантару ĕçне анлăн сарса ятăмăр.

Колхозниксем хушшинче ывăнма пĕлмесĕр политикăллă-массăллă ĕçе туса пыни ĕç дисциплинине çирĕплетме май пачĕ. Кашни эрнере пĕрре е икĕ доклад, е лекци буласси йăлана кĕчĕ. Çак ĕçе йĕркеллĕ тăвас тесен, паллах, лайăх клуб кирли куç умне тухса тăчĕ. Çапла вара колхозниксем клуб тума йышăнчĕç, ăна эпир кĕске вăхăт хушшинче туса лартрăмăр. Çакă вара пире политикăллă-массăллă ĕçпе пĕрлех культурăпа çутĕçне те йĕркелесе яма май пачĕ.

Қалама çук пысăк йывăрлăхсене çĕнтерсе, большевиксен партийĕ ертсе пынипе «Дружба» колхоз вăрçă хыççăнхи 5 çул хушшинче юлса пыракан колхозсен ретĕнчен малти вырăна тухрĕ. Халĕ пирĕн колхоз государство умĕнче парăмлă мар, государство умĕнчи пур тĕрлĕ поставкăсене те срокчен пурнăçласа пырать.

Пирĕн «Дружба» колхоз членĕсем юлашки пилĕк çул хушшинче агротехника правилисене пĕр пăркаланмасăр тата лайăх пахалăхпа пурнăçласа пыма вĕренчĕç. Вырăнти тата минерал удобренисемпе усă курни, ял хуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туни мĕнле пысăк вырăн йышăннине хăйсен куçĕпе курчĕç. Ăна халĕ пирĕн колхоз пурнăçĕнчи йышлă фактсемпе çирĕплетсе пама пулать. Пирĕн колхозра тырă тухăçлăхĕ çултан çул ӳссе пычĕ. 1942 çулта кашни гектартан вăтам шутпа 5,1 центнер тĕштырă пухса илнĕ пулсан, 1949 çулта кашни гектартан 18,6 центнер туса илтĕмĕр, уйрăм бригадăсем 30-шар центнер илчĕç. Иртнĕ çул пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕшĕн, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, Кирилл Николаевич Николаевпа Валентина Степановна Григорьева юлташсене Социализмла Ĕç Геройĕ ятне парса чыс турĕç, 5 колхозника — Ленин орденĕпе, 4 колхозника — Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе, 6 колхозника—«Ĕçри хастарлăхшăн» медальпе, 6 çынна — «Ĕçре палăрнăшăн» медальпе наградăларĕç. Юлашки икĕ çул хушшинче вăйлă тырпул туса илнĕшĕн 35 колхозник правительство наградине илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Çĕр — колхоз пуянлăхĕн çăлкуçĕ. Вăйлă тырпул туса илни тĕрлĕ строительство ĕçĕсене тума май пачĕ. 200 çын вырнаçмалăх клуб çуртне тунисĕр пуçне татах 50 çын вырнаçмалăх читальня турăмăр. Читальнăра пирĕн кĕнекесем пĕр пине те çитместчĕç. Кĕнеке фондне ӳстерме кăçал эпир 3 пин тенкĕ уйăртăмăр. Çак укçан çурри ытла пайĕпе ял хуçалăх çинчен çырнă кĕнекесем туянтăмăр. Колхоз правленийĕн çурчĕ, радиоузел, электростанци, телефон станцийĕ, 4 машина лартма автогараж, механизациленĕ зерносушилка, ферма çурчĕсене çĕнĕрен турăмăр. Урам хушшине 600 метр тăршшĕ ытла хăмаран тротуар сартăмăр. Колхоз правленийĕ тавра сад лартса çитĕнтеретпĕр. Ял тулашĕнче 110 гектар çинче сад тума палăртрăмăр. Пирĕн «Дружба» колхоз тавра çырмасем нумай, вĕсене пĕвелесе 10 кӳлĕ турăмăр, унта карп тата

карас пулă ĕрчететпĕр. Кÿлĕсемпе пĕвесем туни хур-кăвакал усрама май пачĕ. Халĕ пирĕн колхозра хур-кăвакал усраман пĕр хуçалăх та çук. Пирĕн колхозниксем 4 гектар çине çырмасем тăрăх йывăç лартса хăварчĕç, вĕсем пурте ÿсеççĕ.

Колхоз уй-хирне 10 пусă çине куçартăмăр. Халĕ пирĕн колхоз выльăх апачĕ туса илмелли пусă çаврăнăшĕ çине куçрĕ. Пирĕн колхоз сортлă вăрлăх туса илекен артель шутланать. Пур тĕрлĕ тырăсем те пирĕн сортлă. 110 гектар çинче вăрлăхлăх клевер тата люцерна çитĕнет.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те эпир пысăк çитĕнÿсем турăмăр. Ĕне выльăх хисепĕ, 1942 çулхипе танлаштарсан, 30 хут, сурăхсен шучĕ 8 хут ытла ÿсрĕ. Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ те ÿссех пырать.

Кашни колхозник килĕнче радио пур тата Ильич лампочки çунать. Колхоза телефонизациленĕ.

Çак çитĕнÿсене пирĕн колхозниксем пур ĕçе те план тăрăх тунипе, Ял хуçалăх артелĕн уставне пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пынипе турĕç. Пур тĕрлĕ ĕçе те халĕ социализмла ăмăрту меслечĕпе туса пыратпăр. Халĕ пирĕн колхозра ĕçлекен коммунистсемпе комсомолецсем 57 çын шутланаççĕ. Вĕсем пурте политикăллă-массăллă ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Лекцисемпе докладсем тума пултаракансем колхозра 25 çынтан иртет. Вĕсем кашни бригадăрах лекцисем вулаççĕ, докладсем тăваççĕ, калаçусем ирттереççĕ. Лекторсен группинче, учительсемпе ял хуçалăх специалисчĕсемсĕр пуçне, Социализмла Ĕç Геройĕсем, орденоносецсем — вăйлă тырпул мастерĕсем те тăраççĕ. Колхозниксем хушшинче юлашки икĕ уйăх хушшинче кăна ял хуçалăх темипе 21 лекци ирттернĕ.

Паллах, колхозра эпир ял хуçалăх ыйтăвĕсемпе кăна лекцисемпе докладсем тунипе чарăнса тăмастпăр. Халĕ колхозниксен тавракурăмĕ питĕ пысăк. Вĕсем Корейăри лару-тăру çинчен, Вьетнампа Малайăри, Бирмăпа Индонезири тата ытти çĕршывсенчи халăхсем ирĕке тухассишĕн мĕнле кĕрешни çинчен пĕлесшĕн. Аслă Китай халăхĕ тата халăх демократийĕн çĕршывĕсенче çĕнĕ пурнăç тăвассишĕн мĕнле кĕрешнипе те интересленеççĕ. Наука, литература тата искусство ыйтăвĕсем çинчен те лекцисемпе докладсем итлесшĕн. Эпир, коммунистсем, колхозниксен çак ыйтăвĕсене яланах тивĕçтерсе пыма, вăхăтра кирлĕ лекци е доклад ирттерме тăрăшатпăр. Политикăллă-массăллă ĕçе, культурăпа çутта кăларас ĕçе тата лек-

цилле пропагандăна лайăх туса пыни ĕç тухăçлăхне хăпартать, çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарать.

СССР Министрĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1950 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ял хуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен йышăннă постановление эпир кашни колхозникпа колхозницăна тĕплĕн ăнлантарса патăмăр. Колхозниксем уйра ĕçленĕ вăхăтра вĕсене ĕçленĕ çĕртех кашни кунах Корейăри ларутăру çинчен ăнлантарса патăмăр.

Нумай пулмасть эпир Стокгольмра йышăннă Воззвани çине алă пусрăмăр. Халĕ эпир пĕтĕм тĕнчери мире, хамăр çĕршыв хăватне тырпула срокчен пуçтарса кĕртнипе, государствăна тырă памалли обязательствăна срокчен пурнăçланипе çирĕплетĕпĕр.

Пирĕн çитĕнӳсем пĕчĕк мар. Анчах тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармастпăр. Пĕтĕм тырпула вăхăтра пухса кĕртессишĕн, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме колхозниксене мобилизацилетпĕр.

**И. ГРИГОРЬЕВ,**
**колхоз председателĕ, орденоносец.**

## ПОЛИТИКĂЛЛĂ-МАССĂЛЛĂ ТАТА КУЛЬТУРĂЛЛĂ ĔÇЕ АНЛĂН ТУСА ПЫРАТПĂР

Тырă вырма тухиччен чылай малтан «Дружба» колхозри парторганизаци хăйĕн пухăвĕнче тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра кадрсене вырнаçтарас тата политикăллă-массăллă ĕçе туса пырас ыйтусене сӳтсе яврĕ. Пухура комсомолецсем тата колхоз активĕ пулчĕç.

Коммунистсене эпир уйрăм бригадăсене çирĕплетсе ответлă ĕçсене вырнаçтартăмăр. А. П. Петрова коммунисткăна тырă тасатса ăна государствăна леçес ĕçе, Павлов коммуниста авăн çапнă çĕре уйăртăмăр, ытти коммунистсемпе комсомолецсене, пурĕ 44 çынна, бригадăсенче тата фермăсенче ĕçлекенсем хушшинче агитаторсем пулса ĕçлеме çирĕплетрĕмĕр. Çак пухура эпир тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра лекцилле пропагандăпа культурăллă ĕçсен планне те сӳтсе явса çирĕплетрĕмĕр.

Эпир уйăрнă агитатор-коммунистсем уй-хирте ытти колхозниксемпе пĕрлех ĕçлеççĕ. Ыраш вырса кĕртнĕ тата авăн çапнă çĕрте С. С. Александрова коммунистка нормăна кулленех 135—140% тултарса пычĕ. М. П. Павлов агитатор-коммунист 5-мĕш бригадăра кĕлте турттарса капана хывас ĕçре ĕçлет, кашни кунах нормăна ирттерсе тултарать. Вăл—кĕлте турттаракансем хушшинче социализмла ăмăртăва организацилекенсенчен пĕри. Пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçленине пула 235 гектар çинчи ыраша кĕске вăхăт хушшинчех капана хывса пĕтертĕмĕр. Агитаторсем ытти бригадăсенче те ăнăçлă ĕçлеççĕ. Коммунистсемпе комсомолецсем социализмла ăмăртăва пуçарса пынине пула, ыраш вырса пухас ĕçе эпир 7 ĕç кунĕ вырăнне 5 ĕç кунĕнче лайăх пахалăхпа туса пĕтертĕмĕр. Ыраш вырнă тата авăн çапнă вăхăтра, куллен агитаци ĕçне туса пынисĕр пуçне, лекцисемпе докладсем те ирттертĕмĕр. Юлашки икĕ эрне хушшинче кашни бригадăрах Корейăри лару-тăру, ыраша вăхăтра акнин пĕлтерĕшĕ, минерал удобренисем тырă тухăç-



„Дружба" колхозри пуҫламăш
парторганизаци секретарĕ
Василий Тимофеевич Тимофеев.

лăхне ӳстерни ҫинчен тата ытти темăсемпе те лекцисем ирттертĕмĕр.

Лекцисене ялти клуб ҫумĕнчи лекторсен группин членĕсем И. Г. Григорьев, Г. И. Иванов, С. В. Венедиктов юлташсем вуларĕҫ. Унсăр пуҫне, вăйлă тырпул мастерĕсем—Социализмла Ĕҫ Геройĕсем В. С. Григорьевăпа К. Н. Николаев юлташсем те хăйсен ĕҫ опычĕсем ҫинчен колхозниксене кашни бригадăрах ăнлантарса параҫҫĕ. Хăш-пĕр чухне, колхозниксем килте вăхăтра, эпир радио тăрăх та лекцисемпе докладсем вулас ĕҫе организацилерĕмĕр.

Юлашки вăхăтра пирĕн колхозри ĕҫсемпе паллашас шутпа районти 7 колхозран делегатсем, унсăр пуҫне, Шупашкарта колхоз кадрĕсене хатĕрлекен шкулта вĕренекен 25 колхоз председателĕ экскурсире пулчĕҫ. Вĕсене вăйлă тырпул туса илнĕшĕн Ленин орденĕ илнĕ И. Г. Григорьев лекцисем вуласа пачĕ тата Социализмла Ĕҫ Геройĕсем Григорьевăпа Николаев юлташсем те калаҫусем ирттерчĕҫ. Ҫак юлташсен калаҫăвĕсенче пирĕн колхозниксем те пулчĕҫ.

Колхозри политикăллă-массăллă тата культурăллă ĕçе эпир тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра та пĕр чарăнмасăр туса пыратпăр. Колхозниксем кун сиктерсе кинокартина пăхаççĕ. Нумаях пулмасть вĕсем «Дочери Китая» ятлă кинокартина курчĕç. Кино умĕн Китай халăх республикин çитĕнĕвĕсем çинчен доклад туса патăмăр. Çакă колхозниксен кăмăлне кайрĕ, çавăн пекех ытти картинăсем умĕн те яланах тĕнĕ пек калаçусемпе докладсем ирттеретпĕр. Кино умĕн калаçу ирттерни картинăна лайăхрах ăнланма май парать, çавăн пекех час-часах доклад хыççăн кино кăтартни те доклада тĕплĕнрех ăнланма пулăшать.

Колхозниксем хушшинче хаçат-журнал вулас ĕçе те эпир лайăх йĕркелерĕмĕр. Уйрăмах ку ĕçе Социализмла Ĕç Геройĕ В. С. Григорьева тата М. Д .Дмитриева, В. В. Васильева агитаторсем лайăх туса пыраççĕ.

Кашни бригадăрах «боевой листоксем» тухаççĕ. Вĕсенче уйрăм колхозниксен тата çавăн пекех бригадăсен çитĕнĕвĕсемпе çитменлĕхĕсем çинчен çыратпăр. «Боевой листок» тухнă хыççăнах ăна ушкăнпа пухăнса вулассине йĕркеленĕ. Каçхине, колхозниксем ĕçрен таврăннă хыççăн, «Колхозри хыпарсене» радиопа паратпăр. Çапла вара ял хуçалăх ĕçĕсем колхозра мĕнле пыни тата хăш бригада е колхозник мĕнле ĕçлени çинчен колхозниксем вăхăтра пĕлсе тăраççĕ.

Пирĕн колхозра колхозниксемпе колхозницăсем тата уй-хир бригадисем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсен пуçарăвне сарса пырассине, вĕсен ĕçри активлăхне вăйлăлатассине, малта пыракансен опычĕсемпе анлăн усă курмалла тăвассине— парти организацийĕ хăйĕн чи тĕп ĕçĕсенчен пĕри вырăнне хурать.

Колхозра социализмла ăмăртăва вăйлатса пынипе пĕрлех, ĕçри чăрмавсене хăюллăн пĕтерсе пыма пĕлмелле. Пирĕн колхоз малта пыракан кăтартуллă колхоз пулсан та, хăш чухне унăн ĕç ăнăçлăхне кивĕ меслетсем чăрмантараççĕ, эпир критикăпа самокритикăна анлăн сарса пырса çав чăрмавсене çийĕнчех пĕтерсе пыратпăр.

Сăмахран, çакăн пек тĕслĕх илсе кăтартма пулать. Кăçал ыраш вырма тухсан, уйрăм колхозниксем авăн çапас ĕçе вырса пĕтернĕ хыççăн тин пуçăнма шутлатчĕç, çак шухăша вĕсем тĕрлĕ сăлтавсемпе çирĕплетме пăхатчĕç: ыраш чĕрĕ, çĕмелте ларсан вăл кăшт типет, государствăна тырă вырăнне курăк вăрлăхĕ парас, тетчĕç.

Большевикла критикăпа самокритикăна сарса пыни çеç ĕçри кулленхи çитменлĕхсене палăртса, вĕсене вăхăтра пĕтерсе пыма, колхозниксен массине мобилизацилеме май пачĕ.

Социализмла ăмăртăва колхозниксен анлă массине хутшăнтарни вăл—ĕçĕн пуçламăшĕ кăна-ха. Эпир социализмла ăмăртăвăн результачĕсене куллен палăртса пыма тăрăшатпăр.

Ăмăртура кам мĕнле ĕçленипе паллашма ятарласа хатĕрленĕ кăтарту хăми çине çырса пыратпăр. Кунсăр пуçне, кашни бригадăрах тата колхозра Хисеп хăми пур. Хисеп хăми çине, парти организацийĕпе колхоз правленийĕ йышăннă тăрăх, ĕçпе чапа тухнă çынсене çыратпăр.

Бригадăри Хисеп хăми çине кĕртме тивĕçлĕ колхозниксене пĕлес шутпа, социализмла ăмăрту итогĕсене кашни кунах тĕрĕслетпĕр.

Колхозниксемпе колхозницăсем кăçал вăйлă тырпул туса илессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлерĕç. Çуркунне тата çулла çанталăк уяр тăнине пăхмасăрах вăйлă тырпул пăхса çитĕнтертĕмĕр. 381 гектар çинче тĕштырă, вăрлăхлăх курăк, пахча çимĕçĕ тата çĕрулми лайăх çитĕнчĕ. Эпир вĕсене пурне те вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртрĕмĕр. Утă çулнă, ыраш вырса авăн çапнă вăхăтра кашни кун тенĕ пекех çумăр çуса тăчĕ пулин те, эпир çак ĕçсене срокчен тата пĕр тăккаламасăр пурнăçларăмăр.

Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем, пĕтĕм совет çĕршывĕнчи ĕç çыннисем пекех, Стокгольмра йышăннă Воззвани çине алă пуснă чухне тырпула хăвăрт тата тирпейлĕ пухса кĕртсе, государствăна срокчен тырă парса татса хамăрăн Тăван çĕршывăн тĕрекне çирĕплетме сăмах пачĕç. Çак ответлă тата хисеплĕ сăмаха пурнăçлассишĕн вĕсем кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлесе хăйсен сăмахне чыслăн тӳрре кăларчĕç.

Агрономи науки вĕрентнĕ пек ĕçлесе тунă çитĕнӳсем колхозниксемпе колхозницăсене савăнтараççĕ. Эпир ял хуçалăх ĕçĕсене вĕçлесе пыратпăр. Сортлă вăрлăх çителĕклĕ хатĕрлесе тасатса хутăмăр.

Тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармастпăр эпир. Колхозниксем çапла шутлаççĕ: колхозăн общество хуçалăхне татах та ытларах тĕреклетсе пымалла, тырпулпа выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем ытлăн-çитлĕн пулмалла. Çак тĕллевпе эпир 1951 çулхи пысăк тухăçлă тырпулшăн кĕрешме тытăнтăмăр. Кĕрхи çĕртме тумалли плана вăхăтра пурнăçларă-

мăр. 1951 çултан пуçласа пур культурăсене те кĕрхи çĕртме тунă çĕр çине кăна акатпăр.

1950 çулхи ял хуçалăх çулне кăтартуллăн вĕçлесе. 1951 çулта Пĕтĕм Союзри Ял хуçалăх выставкине хутшăнма тивĕçлĕ пулассишĕн кĕрешетпĕр.

**В. ТИМОФЕЕВ,**
**Колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ, орденоносец.**

## ТЫРПУЛ—ПИРĔН ГОСУДАРСТВО ПУЯНЛĂХĔПЕ ТĔРЕКĔ

(*Социализмлă Ĕç Геройĕ К. Н. Николаев юлташ калаcа панинчен*)

Партипе правительство тата аслă Сталин колхозлă яла тĕреклетессишĕн куллен тăрăшаççĕ. Қам колхозра пĕтĕм вăя хурса ĕçлет, колхоза тĕреклетме тăрăшать,— ăна чыслаççĕ, хисеплеççĕ.

Эпĕ «Дружба» колхозри 5-мĕш уй-хир бригадинче ĕçлетĕп. Бригадăри колхозниксем вăйлă тырпул туса илессишĕн, çĕр ĕçĕн культурине хăпартассишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешеççĕ. Иртнĕ çул çанталăк лайăх пулмарĕ, çапла пулин те агротехника правилисене пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пынине пула, эпир 47 гектар çĕр лаптăкĕ çинче кашни гектартан 22,29 центнер кĕрхи тулă пухса илтĕмĕр. Ыраш вара татах та ăнса пулчĕ. 13 гектар çĕр çинче кашни гектартан 31,12 центнер ыраш илтĕмĕр.

Çак тырра мĕнле туса илтĕмĕр-ха эпир?

Чи малтанах, ял хуçалăх пĕлĕвĕсене тĕплĕнрех вĕренсе алла илес шутпа, бригада членĕсем агрокружокра вĕренчĕç. Эпĕ хам та кружок занятийĕсене тата ял хуçалăх ыйтăвĕсемпе пулакан лекцисемпе докладсене пĕрре те сиктермесĕр çӳрерĕм. Çапла вара, пысăк тухăçлă тырпул туса илес тесе, мĕнле ĕçлемеллине тĕплĕн вĕрентĕмĕр.

Пысăк тухăçлă тырпулшăн кĕрешес ĕç тырă акиччен нумай малтан пуçланать. Хамăрăн бригадăн ыраш акмалли лаптăка 960 лав тислĕк кăлартăмăр. Çĕртмене май уйăхĕнчех тракторпа 22 сантиметр тарăнăш сухаларăмăр. Çĕртме пуссинче нимĕнле çум курăкĕ те пулман, мĕншĕн тесен сухалана хыççăн пĕр уйăхран культиваци тунă, акиччен виçĕ хут сухаларăмăр. Акас умĕн 9 центнер фосфорит çăнăхĕ, 2 центнер суперфосфат сапрăмăр. Кĕрхи тырăсене эпир августăн 10-мĕшĕнче акма тытăнтăмăр, акасса пĕтĕмпех рядовой сеялкăпа акрăмăр. Қалча питĕ тикĕс тата пĕр харăс шăтса тухрĕ. Қалчана яланах таса тытатпăр. Кĕркунне калча çинче выльăхсем нихçан та



Социализмлă Ĕç Геройĕ
Кирилл Николаевич Николаев.

çӳретмен. Сăртлă вырăнсене, калча ан шăнтăр тесе, юр тытса хăвартăмăр. Апрелĕн 28-мĕшĕнче калчана гектар пуçне 1,5 центнер кали тăварĕ, 3 центнер аммони сульфачĕ сапса апат патăмăр. Унтан суха кассине урлă май пĕрер хут сӳрелерĕмĕр. Ырашпа кĕрхи тулă лайăх çитĕнчĕç. Ыраша искусственнăй майпа шăркалантартăмăр. Ыраша пĕр тăккаламасăр, кĕске срокра пухса кĕртрĕмĕр. Ыраш вырма тухсан иккĕмĕш куннех авăн çапма тата государствăна тырă пама тытăнтăмăр. Хире пирĕн пĕр пучах та выртса юлман тата авăн çапнă чухне те тырă арпана е улăма кайман. Çапла ĕçлесе манăн бригада вăйлă турпул туса илчĕ.

Партипе правительство мана пысăк хисеп турĕç. Иртнĕ çул вăйлă тырпул туса илнĕшĕн мана, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, Социализмлă Ĕç Геройĕн ятне пачĕç. Çак пысăк та хисеплĕ ят манăн бригада членĕсене тата мана хама та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать. Халĕ колхозра тырпул пухса кĕртес, авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕç хĕрӳллĕ

пырать. Манăн бригада членĕсем ĕçе пĕр харăс тухаççĕ, хĕвел тухиччен тытăнса сĕм-тĕттĕм пуличчен пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ырашпа тулă вырнă çĕрте Раиса Макарова, Перасковия Ефремова, Анна Максимова, Мария Иванова малта пыраççĕ, тата пысăк пахалăхпа ĕçлеççĕ.

Эпĕ ертсе пыракан бригадăра агитациллĕ-массăллă ĕçе колхозниксем ĕçленĕ çĕрте тăватпăр. Ирхи апат çинĕ вăхăтра политикăллă информаци туса ирттеретпĕр. Бригадăра хаçат вулассине, стена хаçачĕпе «боевой листоксем» кăларассине те лайăх йĕркелерĕмĕр. Çĕнĕ хаçатсемпе журналсене ĕçленĕ çĕрех илсе пыраççĕ, эпир вĕсене унтах вулатпăр. Халĕ пирĕн колхозниксем уйрăмах Корейăри лару-тăрупа интересленеççĕ. Корея халăхне Америка агрессорĕсем тапăнни пирĕн колхозниксене чăтма çук кӳрентерсе тарăхтарать. Пирĕн колхозниксем, пĕр кăмăллă пулса, Корея халăхĕн тӳрĕ ĕçĕ çĕнтерессине ĕненсе тăраççĕ.

— Вăрçа хирĕç, мир лагерьне çирĕплетессишĕн, мир ялавне тытса пыракан аслă Сталин ертсе пынипе, хамăрăн аслă Тăван çĕршыва çирĕплетессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлетпĕр.

З. 2745.

## ЭПИР МИРШĔН ĔÇЛЕТПĔР

*(Социализмлă Ĕç Геройĕ Р. С. Григорьева юлташ каласа панинчен)*

Совет правительстви коммунизмăн аслă стройкисем çинчен—Атăл çинче Куйбышевпа Сталинград гидроэлектростанцийĕсене, Туркменире тĕп канал, Днепр çинче Каховка гидроэлектростанцине, Кăнтăр Украина каналне тата Çурçĕр Крым каналне тăвасси çинчен йышăннă историллĕ постановленисене эпир, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, чунтан-чĕререн савăнса, Тăван çĕршывăн вăй-хăвачĕшĕн хĕпĕртесе кĕтсе илтĕмĕр.

Пирĕн çĕршыв коммунизм стройкисене туса пынă тапхăрта, Америка империалисчĕсем çĕнĕ вăрçа чĕртсе яма ĕмĕтленеççĕ. Вăл кăна мар, вĕсем Корея халăхне вăрă-хурахла тапăнса, мирлĕ хуласемпе ялсем çине бомбăсем пăрахса, айăпсăр халăхăн юнне юхтараççĕ. Паллах, çак çăткăн империалистсен юнлă ĕçĕ тĕнчери прогрессивнăй çынсене кӳрентерсе тарăхтарать.

Эпир яланах хамăр çĕршыва хӳтĕлеме хатĕр. Тăван çĕршывăн вăй-хăватне çирĕплетесси—пирĕн чи таса тивĕç тата пархатарлă ĕç пулса тăрать. Çакна пирĕн колхозниксем тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра яланах асра тытса ĕçлерĕç. Çавăнпа та эпир ял хуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă вĕçлерĕмĕр.

Тырпул пухса кĕртнĕ чухне кăçал çанталăк ытла та начар пулчĕ, ялан тенĕ пекех çумăр çуса тăчĕ. Çавна май уяр çанталăкăн кашни сехечĕпе туллин усă курасси—ответлă ĕçсенчен пĕри пулчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем çак ответлăха туйса ĕçлерĕç, çавна пула кăна ял хуçалăхĕнчи тĕп ĕçсене пирĕн колхоз вăхăтра туса çитерчĕ.

Пирĕн ĕçре пысăк опыт пур. Иртнĕ çул эпир тухăçлă тырпула вăхăтра пĕр тăккаламасăр пухса кĕртрĕмĕр, государствăна срокчен тырă парса татрăмăр, вăрлăха таса та сортлă тырă уйăрса хăвартăмăр тата колхозниксене кашни ĕçкунĕ пуçне тăватшар килограмм ытларах ва-



Социализмлă Ĕç Геройĕ
Валентина Степановна Григорьева.

леçсе патăмăр. Хамăра уйăрса панă 12,5 гектар çĕр лаптăкĕ çинче кашни гектартан 30,3 центнер ыраш пухса илтĕмĕр. Пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕшĕн мана правительство Социализмлă Ĕç Геройĕ ятне пачĕ. Мана пысăк хисеп тата чыс тунăшăн эпĕ большевиксен партийĕпе Совет правительствине тата аслă çулпуçăмăра, тăван аттемĕре И. В. Сталин юлташа чунтан-чĕререн тав тăватăп. Эпир кăçал та вăйлă тырпул туса илтĕмĕр. Ырашпа тулă тухăçĕ иртнĕ çулхинчен кая мар.

Тырпул пухса кĕртнĕ чухне те эпир политикăллă-массăллă тата культурăллă ĕçе тума манмарăмăр. Хĕрӳ ĕç пынă вăхăтра та политикăллă информацисем, калаçусем, докладсемпе лекцисемирттертĕмĕр. Валентина Васильева, пирĕн бригада членĕ, вăхăтра «боевой листоксем» кăларать.

Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем лекцисемпе докладсене юратса итлеççĕ. Тырпул пухса кĕртнĕ чухне те, йĕпе-сапа вăхăтĕнче, лекцисем ирттернĕ. Тӳрех калас пулать, эпĕ хам та лекцисем итлеме юрататăп. Иртнĕ хĕлле, агрокружокра вĕреннисĕр пуçне, каш-

ни эрнерех пулса иртекен лекцисене итлеме эпĕ пĕр сиктермесĕр çӳрерĕм, вăл лекцисем мана нумай пĕлӳ пачĕç. Эпĕ хам та час-часах мĕнле майпа пысăк тухăçлă тырпул туса илни çинчен юлташсене каласа паратăп. Чăн та, малтанлăха халăх хушшинче тухса калаçма именмелле пек туйăнатчĕ. Халĕ эпĕ тухса калаçма, докладсем тума хăнăхрăм теме пултаратăп. Ку тĕлĕшпе мана колхоз председателĕ И. Г. Григорьевпа пуçламăш парторганизаци секретарĕ В. Т. Тимофеев юлташсем сахал мар вĕрентрĕç тата халĕ те пулăшаççĕ.

Атомлă хĕç-пăшалпа усă курма чармалла тăвассишĕн алă пусас кампани пынă вăхăтра пирĕн колхозниксем, пĕр кăмăллă пулса, Стокгольмра йышăннă Воззвани çине алă пусрĕç. Çак историллĕ документ çине алă пусса, пирĕн колхозниксем миршĕн кĕрешекенсен фронтне вăйлатнине, пĕтĕм тĕнчери миршĕн кĕрешекенсене хавхалантаракана—аслă Сталин аттемĕре вĕçĕмсĕр парăнса тăнине кăтартса пачĕç.

Халĕ эпир выльăх-чĕрлĕх çурт-йĕрĕсене хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлетпĕр. Эпир, пĕр кăмăллă пулса, çапла йышăнтăмăр: килес çул вăйлă тырпул туса илессишĕн пур майпа та лайăх хатĕрленмелле, государствăна памалли пур тĕрлĕ парăмсене те срокчен парса татса, хамăрăн Тăван çĕршывăн тĕреклĕхне çирĕплетме тăрăшмалла.

Çак тĕллеве пурнăçлассишĕн, мирлĕ пурнăçа тĕреклетессишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлетпĕр.

## ЯЛ ХУÇАЛĂХ ПĔЛĔВĔСЕНЕ ҪОЛХОЗНИҪСЕМ ХУШШИНЧЕ ЫТЛАРАХ САРАР

*(Колхоз агрономĕ Г. И. Иванов юлташ каласа панинчен)*

Пирĕн колхозсем организаципе хуçалăх енчен çирĕпленсе çитрĕç. Ял хуçалăхĕ çĕнĕ машинăсемпе хĕçпăшалланса пырать. Ҫолхозниксем агротехника пĕлĕвĕсене вĕренсе, вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ. Халĕ ĕнтĕ совет агрономи наукин çитĕнĕвĕсене колхозниксем хушшинче анлăрах сарасси, вĕсене куллен вĕрентсе пырасси — ял хуçалăх специалисчĕсем умĕнчи ответлă тата хисеплĕ задачисенчен пĕри пулса тăрать.

Агрономи наукин çитĕнĕвĕсене тата вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе малта пыракансен ĕçри опытне ял хуçалăх производствинче пурнăçлама тата колхозниксен агротехникăпа зоотехника пĕлĕвĕсене яланах ӳстерсе пыма пирĕн пур условисем те çителĕклĕ.

Иртнĕ çул «Дружба» колхозра агрокружок организациленĕччĕ. Унта 35 колхозник занятисене пĕр сиктермесĕр çӳрерĕ. Анчах та агрокружока 35 колхозника çеç явăçтарни çителĕклĕ теме çук. Чи малтанах, пирĕн колхоз производствине 35 çын мар, темиçе хут нумайрах колхозниксем хутшăнаççĕ. Ҫунсăр пуçне, кружокра кăна вĕренни çителĕксĕр.

Ҫакна шута илсе, иртнĕ çул эпир, ял клубĕ çумĕнче организациленĕ лекторсен группипе пĕрле, ял хуçалăх пĕлĕвĕсене анлăрах сарас тесе тата вĕренĕве колхозниксен йышлăрах массине явăçтарас тесе, эрнере пĕр хутран кая мар ял хуçалăх ыйтăвĕсемпе лекцисемпе докладсемирттертĕмĕр. Ял хуçалăх темисем тăрăх эпĕ хам та, колхоз председателĕ И. Г. Григорьев, ветеринар Н. В. Зайцев, учительсем, районти ял хуçалăх специалисчĕсем лекцисем вуларĕç.

Ҫолхозниксене, чи малтанах, вырăссен паллă ученăйĕсен В. В. Докучаевăн, П. А. Ҫостычевăн, Ҫ. А. Тимирязевăн, И. В. Мичуринăн, В. Р. Вильямсăн тата Т. Д. Лы-



Колхоз агрономӗ
Георгий Иванович Иванов.

сенкӑн вӗрентӗвӗсемпе кӗскен паллаштартӑмӑр. Ҫак аслӑ ученӑйсен вӗрентӗвӗсем, вӗсен пурнӑҫӗнчи пысӑк ӗҫсем колхозниксене интереслентереҫҫӗ, ҫӗрӗҫ техникин ыйтӑвӗ ҫине тӗплӗн пӑхма вӗрентеҫҫӗ. Пирӗн колхозниксем тӑпрапа унӑн структури, нумай ҫул ӳсекен курӑк акни мӗнле усӑ пани, минерал удобренисемпе тата вырӑнти удобренисемпе усӑ курни пысӑк вырӑн йышӑнса тӑни ҫинчен, тӗпрен илсен, чылайӑшӗ пӗлеҫҫӗ.

Колхозниксем кружоксенче вӗреннине ҫирӗплетес, лекцисемпе докладсенче каланисене практикӑра пурнӑҫлама хатӗрлес тесе, иртнӗ ҫулсенче эпир республикӑра малта пыракан колхозсене кайса, вӗсен ӗҫри опычӗсемпе вырӑнта паллашас ӗҫе организацилерӗмӗр. Эпир Вӑрнар районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан Ленин орденӗллӗ колхозра тата Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозра пултӑмӑр. Ҫак экскурсисене пирӗн 33 колхозник хутшӑнчӗ. Малта пыракан колхозсенче Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗсемпе тӗл пулса калаҫрӑмӑр, хамӑра интереслентерекен ыйтусем ҫинчен ыйтса пӗлтӗмӗр, вӗсен ӗҫӗсене вырӑнта, вӗсем ӗҫлекен колхозсенче, куртӑмӑр.

паллах, çак экскурсисем хамăр вĕреннĕ теорие çирĕплетрĕç, агротехника пĕлĕвĕсене пурнăçласа пырсан, колхоз производствинче чăн та пысăк çитĕнӳ тума май пуррине кăтартса пачĕç.

Агрокружокра вĕренни, лекцисемпе докладсене лайăх хатĕрленсе колхозниксене ял хуçалăх науки çинчен пур майсемпе те ăнлантарни тата малта пыракан колхозсенчи вăйлă тырпул мастерĕсен ĕçĕсемпе вырăна кайса паллашни лайăх результатсем пачĕç. Пирĕн колхоз республикăра малта пыракан колхозсен ретне кĕчĕ, иртнĕ çул эпир пысăк тухăçлă тырпул туса илтĕмĕр.

Çапла вара пирĕн колхоз 280 гектар ыраш акнă çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 22,3 центнер, уйрăммăн пăхса ӳстернĕ 80,3 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 30 центнер ытла ыраш туса илчĕ. Вырăссен аслă ученăйĕ И. В. Мичурин калашлĕ, эпир çутçанталăк пирехĕрхенсе тырпул туса парасса кĕтсе ларма пултараймастпăр, унтан илесси—пирĕн задача пулса тăрать. Çакă вăл çакна çирĕплетсе пачĕ: пысăк тухăçлă тырпул туса илессесен, чи малтанах, агрономи наукине тĕплĕн вĕренмелле, агротехника правилисене пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пымалла, ăнса пулнă тырпула вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртмелле. Çак ĕçсене тумашкăн эпир колхоз членĕсене пурне те мобилизацилерĕмĕр, вĕсем хушшинче социализмла ăмăртăва анлăн сарса ятăмăр. Пирĕн колхозри 11 коммунистпа 46 комсомолец пур ĕçе те пуçаракансем тата ĕçре пример кăтартса пыракансем пулса тăраççĕ.

Мĕнле ĕçленĕ-ха пирĕн колхозниксем çак асăннă çитĕнӳсене тăвассишĕн?

Ял хуçалăхне çĕнетсе улăштармалли сталинла план çинчен партипе правительство йышăннă постановленире çапла каланă: наука кăтартса панă, малта пыракан колхозсен практикипе çирĕплетнĕ агрономи наукин çитĕнĕвĕсене пурнăçласа пырсан тин ял хуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерме, выльăх-чĕрлĕх валли çителĕклĕ апат хатĕрлеме пулать. Агротехника правилисене пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа эпир малтанхи çитĕнӳсене турăмăр. Курăк акса тумалли пусă çаврăнăшне куçрăмăр. Пирĕн халĕ уй-хир тата выльăх апачĕ туса илмелли пусă çаврăнăшĕсем майланса кайрĕç. Курăк акмалли уй-хир пусă çаврăнăшĕнчи 10 пусăра пирĕн 1149 гектар, выльăх апачĕ туса илмелли пусă çаврăнăшĕнчи 8 пусăра 110 гек-

тар. 10 уйлă пусă çаврăнăшĕнче 2-шне нумай çул ӳсекен курăксем йышăнаççĕ. Выльăх апачĕ туса илмелли пусă çаврăнăшĕнчи 4 пусă çине курăксем акрăмăр, унăн лаптăкĕ 56 гектар.

Тăпрана эпир çакăн пек ĕçлесе пытăмăр. 1949 çулта ыраш акнă пусса пĕтĕмĕшпех предплужниклă трактор плугĕпе сухаласа ирхи çĕртме турăмăр. Тăпрана 20—23 сантиметр тарăнăш сухаларĕç. Çу каçиччен культиваци турăмăр тата тепĕр хут сухаларăмăр. Çакна май çĕртме пуссинче çум курăкĕ пачах пулмарĕ.

Çурхи тырăсем акмалли 325 гектар çĕр çинче кĕрхи çĕртме туса хăвартăмăр, вăл шутра çурхи тулă акма 120 гектар клевер акнă çĕре сухаларăмăр. Кĕрхи çĕртме тунă лаптăка çуркунне сӳрелерĕмĕр тата культиваци турăмăр.

Тасалăх тата шăтас пахалăхĕ енчен акмалли кондицие çитернĕ хыççăн 515 центнер вăрлăха Лысенко академик меслечĕпе хĕвелпе ăшăтрăмăр. 325 центнер вăрлăха (вăл шутра 20 центнер тулла, 124 центнер сĕлле) салат шывĕпе тăрантартăмăр. Тĕштырă вăрлăхне имçампа çунă хыççăн сеялкăпа акса хăвартăмăр.

1950 çулта вырса илмелли ыраш пуссине (1-мĕш хире) çĕртме тунă чухнех 109 гектар çине 2500 лав тислĕк кăлартăмăр. Çĕртме пуссине, çурхи тырăсем акмалли хире çемçетме тата шăтнă калчасемпе нумай çул ӳсекен курăксене апат пама пурĕ 5500 центнер минерал удобренисемпе усă куртăмăр.

Калчасене лайăх пăхса çитĕнтерес шутпа 235 гектар çинчи ыраша кĕркуннех гектар пуçне 2,25 центнер аммони сульфачĕ парса апатлантартăмăр, иккĕмĕш хут — çуркунне, шăн тăпра çине, гектар пуçне 1,5—2 центнер аммиаклă селитра тата 2—2,5 центнер суперфосфат сапса тухрăмăр. 120 гектар çинчи кĕрхи тырăсене çуркунне сӳрелерĕмĕр. 109 гектар çинчи ыраша искусственнăй майпа шăркалантартăмăр. Çурхи тырăсене те шăтса тухсанах апатлантарса, çум курăкĕсенчен яланах тасатса тăтăмăр. Тăрăшса ĕçленин итогĕсем халĕ куç умĕнче: çанталăк юрăхлах пулмарĕ пулин те, кăçал пирĕн тырă тухăçлăхĕ иртнĕ çулхинчен кая мар, ытларах пулать.

Çĕрĕç культурине яланах ӳстерсе пырас шутпа кăçал эпир, маларах асăннисемсĕр пуçне, уй-хир тата выльăх апачĕ пусă çаврăнăшне тивĕçлĕ культурăсем акассине йĕркелерĕмĕр. Курăк акса тумалли пусă çаврăнăшне хăвăртрах пурнăçлас шутпа 130 гектар çине нумай çул

ӳсекен куракксем, пăрçа йышши тата пĕрчĕллĕ тырăсем çĕртме пуссине акса илтĕмĕр. Иртнĕ çул акнă куракксенчен (клеверпа люцерна) 115 гектар вăрлăхлăх хăвартăмăр, вĕсем лайăх çитĕнеççĕ, çум куракĕсенчен таса, пысăк тухăçлă вăрлăх илесси курансах тăрать.

5-мĕшпе 6-мĕш хирсем хушшинче çырма пур, унта эпир иртнĕ çул 4 гектар çине йывăç лартнăччĕ, кăçал кĕркунне татах 4 гектар çине лартатпăр. Пирĕн колхозниксем 1,5 центнер акаци вăрлăхĕ, 10 центнер йĕкел пухрĕç. Çырмасенче 10 пĕвере шыв тытса тăратпăр.

Кăçал эпир 320 гектар çине ыраш акса хăвартăмăр, акмалли лаптăка пĕтĕмпех предплужниклă трактор плугĕпе сухаларăмăр, культиваци турăмăр тата августăн 1-мĕшĕччен иккĕмĕш хут сухаларăмăр.

Кăçал ыраш вырса илнĕ 115 гектар çинчи хăмăла сухаларăмăр. 380 гектар çинче кĕрхи çĕртме турăмăр.

Çак ĕççем пире малашне те пысăк тухăçлă тырпул туса илме май парасса шанса, пирĕн колхозниксем хавхаланса пĕтĕм вăйне хурса ĕçлеççĕ.

СССР Министрĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ тата Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ «Наука çитĕнĕвĕсене тата малта пыракансен опытне ял хуçалăхĕнче пурнăçлас тата пропагандăлас ĕçе мĕнле йĕркелесси çинчен» йышăннă постановление колхозниксем хушшинче сӳтсе яврăмăр.

Çак постановленире партипе правительство колхозсем умне çакăн пек задача лартаççĕ: ял хуçалăхне çĕнĕрен хăватлăн аталантарма колхоз кадрĕсене массăллăн вĕрентсе хатĕрлессине организацилемелле. Халĕ ĕнтĕ уйрăм çынсемпе кадрсен уйрăм ушкăнĕсем вĕренни кăна çителĕксĕр, агротехникăпа зоотехникăна пур колхозниксемпе колхозницăсен те вĕренмелле, наука çитĕнĕвĕсемпе малта пыракансен опычĕ кашнин тивĕçĕ пулмалла.

Колхозниксемпе колхозницăсен агрозоотехника пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе партипе правительство тата аслă Сталин мĕн кирлине пурне те туса пачĕç. Халĕ пирĕн наука çитĕнĕвĕсемпе малта пыракансен опытне тĕплĕн вĕренсе çитсе, çĕрĕçĕнче тата общество выльăх-чĕрлĕхне ĕрчетес ĕçре малашне татах та пысăкрах çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешмелле. Çак задачăна пурнăçлас тесе эпир ывăнма пĕлмесĕр ĕçлетпĕр.

## КОМСОМОЛЕЦСЕМПЕ ÇАМРĂКСЕН ХАСТАРЛĂХĚ

«Дружба» колхозра комсомолецсемпе çамрăксем пысăк вăй пулса тăраççě. Вěсем колхоза хуçалăхпа организаци тěлěшěнчен çирěплетессишěн, вăйлă тырпулшăн, йышлă та тухăçлă выльăх-чěрлěхшěн пыракан кěрешӳре хăйсен хастарлăхне уççăн кăтартреç.

Колхозри комсомолăн пуçламăш организацийěнче 46 комсомолец учётра тăрать. Комсомол организацийěн тěп задачи — çамрăксене ертсе, ěçре хавхалантарса пырасси пулса тăрать. Комсомолецсен çамрăксемпе таччăн çыхăнса ěçлемелле. Çавна шута илсе, комсомол организацийě бригадăсенче, выльăх-чěрлěх фермисенче комсомол групписем турě. Кунсăр пуçне, комсомолецсем ытти ěçсенче те хастарлă ěçлеççě. Комсомол групписем организацилени комсомолецсен авторитетне ӳстерме, пур бригадăсенчи çамрăксемпе те таччăн çыхăнса ěçлесе, вěсене колхоз ěçне анлăн явăçтарма май пачě.

Халě колхозниксем çамрăк ăрăва — комсомолецсемпе çамрăксене шанаççě, вěсене хисеплеççě, ответлă участоксем шанса параççě. Комсомолецсем уй-хир бригадирě те, ветфельдшер та, дояркăсем те, электромонтер та, кěтӳç те пулса тата ытти ěçсенче те ěçлеççě. Акă, 3-мěш бригадăри Валентина Григорьева комсомолка 12,5 гектар çинче кашни гектартан 30,3 центнер ыраш пăхса ӳстернěшěн Социализмлă Ěç Геройě ятне илме тивěçлě пулчě. 3-мěш бригадăна Мария Филиппова комсомолка ертсе пырать. Бригада иртнě çулта вăйлă тырпул пухса кěртрě. Филиппова юлташ ěçне партипе правительство пысăка хурса хакларěç. Вăл Ленин орденě илме тивěçлě пулчě. Колхоз производствинче хастарлă ěçленěшěн тата вăйлă тырпул туса илнěшěн Виталий Антоновпа Иван Федоров комсомолецсене правительство Ěçлěх Хěрлě Ялав орденě парса наградăларě. Кун пек тěслěхсем колхозра татах та пур. Комсомолецсемпе çамрăксем хушшинче орденсемпе медальсем илнисем йышлă.



„Дружба" колхозри комсомол
организацийĕн секретарĕ
Галина Александровна Александрова

Колхозăн тăвată ферма. Обществăллă продуктивлă выльăх-чĕрлĕх йышне, унăн тухăçлăхне ӳстерес ĕçре те комсомолецсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Выльăх-чĕрлĕх ферминче 10 комсомолец ĕçлет. Вĕсенчен 3 доярка, ыттисем пăру, сысна, лаша, чăх-чĕп фермисенче ĕçлеççĕ.

Социализмла ăмăртăвăн пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк. Социализмла «ăмăрту вăл — ĕç çыннисен миллионлă масси пĕтĕм активлăхпа хутшăнса социализм тумалли коммунизмла ĕç меслечĕ», тесе вĕрентет Сталин юлташ. Çулпуçăн çак сăмахĕсене асра тытса пирĕн комсомолецсем шанса панă ĕçсенче пысăк çитĕнӳсем тăвассишĕн пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Пирĕн колхозра социализмла ăмăрту хумĕ кунран кун ӳссе пырать. Массăсен пуçарăвне сарса пырасси, вĕсен ĕçри активлăхне вăйлатасси, малта пыракансен опычĕсемпе анлăн усă курмалла тăвасси—комсомол организацийĕн тĕп задачисенчен пĕри пулса тăрать. Социализмла ăмăртăва вăйлатса колхозри çамрăксене большевикла ертсе пымалла тени, чи малтанах, массăсемпе ĕçлессине

пĕлтерет. Массăсемсĕр социализмла ăмăрту çинчен калаçни пуш сăмах çеç пулать.

Çакна шутра тытса, социализмла ăмăртăва эпир пур çамрăксене те явăçтартăмăр. Тырпул пухса кĕртме хатĕрленнĕ вăхăтра эпир «Социализмла ăмăрту — коммунизмла ĕç меслечĕ» темăпа ятарласа лекци ирттертĕмĕр.

Комсомолăн пуçламăш организацийĕ комсомолецсене коммунистла воспитани парассишĕн, вĕсен идейăллă шайне, юлташлăх туйăмне ÿстерессишĕн тимлĕн ĕçлет. Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче комсомолецсем политшкул программине ăнăçлă вĕçлерĕç. Çавна май вĕсен тавракурăмĕ чылай ÿсрĕ. Нумай комсомолецсем агрокружокра вĕренчĕç. Çамрăксемпе комсомолецсем валли ятарласа лекцисемпе докладсем ирттеретпĕр. Уйрăмах комсомолецсене «В. И. Ленин», «Юлташлăхпа туслăх», «Çутçанталăка улăштарса çĕнетмелли сталинла план» тата ытти темăсемпе туна докладсем питĕ килĕшрĕç.

Комсомолецсен ĕçри хастарлăхĕ колхозниксене савăнтарать. Вĕсем, пур ĕçсенче те тăрăшса ĕçленипе пĕрлех, агитаторсем пулса ĕçлеççĕ, колхозниксене хаçат-журналсем вуласа параççĕ. Стена хаçачĕ, «боевой листоксем» кăлараççĕ. Ĕçри çитменлĕхсене пĕтерессишĕн, умри хуçалăх задачисене лайăх пахалăхпа пурнăçлассишĕн активлă ĕçлеççĕ.

Комсомолецсем — вăйлă тырпул мастерĕсем: В. Григорьева, М. Филиппова, В. Антонов тата И. Федоров часчасах колхозниксем хушшинче хăйсем мĕнле майпа вăйлă тырпул туса илни çинчен докладсемпе лекцисем тăваççĕ, хăйсен ĕçĕнчи опытсем çинчен каласа параççĕ.

Комсомолăн пуçламăш организацийĕ комсомолецсемпе çамрăксен ĕçне тĕрĕс йĕркелессипе пĕрлех кану вăхăтне усăллă ирттерессишĕн те тăрăшать. Вĕсемпе тăтăшах çамрăксен вечерне ирттерет, унта калаçусем, докладсем, лекцисем вуласа параççĕ. Вăхăта усăллă ирттерме клуб, вуламалли пÿлĕм, сад, спорт площадки тата ыттисем те пур.

Эпир клубра час-часах çамрăксен вечерĕсене ирттеретпĕр. Вечерсем пирĕн çапла иртеççĕ: малтан доклад е лекци пулать. Унтан концерт е спектакль лартса паратпăр. Пирĕн клуб çумĕнче драмкружокпа хор кружокĕ ĕçлеççĕ. Нумаях пулмасть ирттернĕ вечера çапла организацилерĕмĕр: малтан лекторсен группин лекторĕ Вене-

диктов юлташ «Совет патриотизмĕ çинчен» доклад туса пачĕ. Доклада пирĕн çамрăксем тимлĕн итлерĕç. Доклад хыççăн хор кружокĕ концерт пачĕ. Çамрăксем сăвăсемпе калавсем тухса каларĕç. Валентин Урдаш çырнă «Ял-йыш саламĕ» ятлă сăвва Петя Иванов тухса каларĕ.

Халь колхозра шăп çирĕм çичĕ паттăр,—
Тырри-пулли пирте ăнса пулать.
Паттăрсене çĕршыв каллех чыс патăр,
Вĕсем çĕнетрĕç пирĕн кун-çула.
Мĕн каласси, тăванăм мухтанмасăр
Чунсем тӳсмеççĕ пирĕн кучухне.
Пиччӳ ĕçлет, пĕр вĕçĕмрен канмасăр
Колхоз тесен, парать вĕри чунне.

Чăн та, Урдашăн сăмахĕсене Иванов кăштах улăштарчĕ. Сăвăра «шăп çирĕм икĕ паттăр» тенĕ, пирĕн ялта вĕсем 27, çавăнпа та ку тĕлте сăвва улăштарни килĕшӳллĕ пулчĕ. Сăвăсем тухса каланă хыççăн ташăсем пуçларĕç. Çамрăксен вечерĕсем пирĕн яланах савăнăçлă иртеççĕ.

Кăçал та колхозниксем вăйлă тырпул пăхса çитĕнтерчĕç. Ăнса пулнă тырпула пĕр тăккаламасăр пухса кĕртесси, государствăна вăхăтра тырă парса татасси — комсомолецсен хальхи вăхăтри тĕп задачи. М. Андреева, В. Степанова, Л. Гаврилова комсомолкăсем тата колхозри ытти çамрăксем те тырă вырнă вăхăтра пысăк тухăçлăхпа ĕçлерĕç. Вĕсем кулленхи нормăна 150—160 процент тултараççĕ. Авăн çапас, государствăна тырă парас ĕçсенче те комсомолецсем малти ретре пычĕç.

Комсомолецсемпе çамрăксем тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармаççĕ. Вĕсем колхоз хуçалăхне тĕреклетессишĕн, тырпул тухăçлăхне ӳстерессишĕн, выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ӳстерессишĕн, телейлĕ пурнăçшăн, Тăван çĕршыв тĕрекĕшĕн хастарлă кĕрешеççĕ.

**Г. АЛЕКСАНДРОВА,**
**колхозри комсомол организацийĕн секретарĕ.**

## НАУКĂПА ÇУТĔÇ ПĔЛĔВĔСЕНЕ САРАССИ—ПИРĔН ПАРХАТАРЛĂ ЗАДАЧА

Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе совет влаçĕ вăхăтĕнче пирĕн Чупай ялĕн сăн-сăпачĕ, пирĕн çĕршыври ытти нумай пин ялсен сăн-сăпачĕ пекех, тĕпренех улшăнчĕ.

Чупай ялĕ ытти ялсенчен уйрăм пулман тата вăл халĕ те уйрăлса тăмасть. Анчах пирĕн ялти колхозниксен ĕçĕ, вĕсен вăйлă тырпулшăн кĕрешес хастарлăхĕпе мастерлăхĕ чылай ялсенчен лайăх енĕпе палăрса тăрать. Ял хуçалăхĕн пур отраслĕсене те малалла хăвăрт аталантарса пынипе, ялти строительство ĕçне вăйлатнипе, йышлă та пысăк тупăшлă выльăх-чĕрлĕхшĕн, вăйлă тырпулшăн, колхозниксен культурине ӳстерессишĕн пысăк ĕçсем тунипе паллă пулса тăрать ку ял.

Эпĕ Чупайра нумай çул хушши учительница пулса ĕçлетĕп. Чупай тата унпа юнашар, пĕр ял Советне кĕрекен Патти ялĕнчи колхозниксен культури ӳснине тата колхозсем хуçалăх енчен тĕрекленсе пынине эпĕ хам ,сăнаса пытăм. Чупай ял Советне кĕрекен «Дружба» тата «Заря» колхозсем хуçалăх енчен тĕреклĕ, культура енчен пысăк ӳсĕм тунă ялсем.

Колхоз пуянлăхĕн çăлкуçĕ — çĕр пулса тăрать пулсан, унăн тĕп вăйĕ вара вăл — çынсем, çак çăлкуçĕпе пĕлсе усă курма вĕреннĕ çынсем пулса тăраççĕ. Колхоз стройĕ çĕнĕ йышши хресченсем ӳстерсе çитĕнтерчĕ, вĕсем çĕрĕç культурине ӳстереççĕ, пуян та культурăллă çĕнĕ пурнăç тăваççĕ. Ялта ĕçлеме, наука пĕлĕвĕсене халăх хушшине сарса пыма халĕ пур условисем те çителĕклĕ, халĕ хресчен вăхăта кирлĕ-кирлĕ мар вырăнсене çӳресе усăсăр ирттермест. Вăл тӳрех клубалла çул тытать. Пирĕн ял Советне кĕрекен ялсенче икĕ клуб пур: Чупай ялĕнче—государство тытса тăракан ял клубĕ, Паттире — колхоз хăй вăйĕпе тытса тăракан клуб. Наука пĕлĕвĕсене сарса пыма, политикăллă-массăллă тата культурăллă ĕçсене тă-



Чупайри лекторсен группин руководителĕ Александра Николаевна Мясникова.

тăшах туса пыма пур условисем те çителĕклĕ. Эпир, çак икĕ ялта ĕçлекен учительсем, çак условисемпе пĕлсе тата пур майсемпе те усă курма тăрăшатпăр. Совет наукин çитĕнĕвĕсем, пирĕн халăхăн сарлака та йышлă ĕçри опычĕсем тата пирĕн большевиксен партийĕ кăларса тăратакан политика ыйтăвĕсем çинчен колхозниксене ăнлануллă каласа парассине эпир хамăрăн чи ответлă, çав вăхăтрах хисеплĕ те пархатарлă ĕç тесе шутлатпăр.

Иртнĕ çулсенче эпир революциллĕ праçниксем умĕн е хуçалăхпа политикăллă кампанисем иртгернĕ вăхăтсенче уйрăм докладсем е лекцисем иртгереттĕмĕр. Анчах çакнашкал ĕçлени çителĕксĕррине эпир, учительсем, хамăрах туйса илтĕмĕр.

Юлашки пилĕк-ултă çул хушшинче колхозниксем хуçалăх енчен кăна мар, культура енчен те пысăк çитĕнÿсем турĕç.

Халĕ пирĕн Чупайра пурăнакан колхозниксем кашни кунах пирĕн çĕршывăн чĕри Мускав сассине итлеççĕ, кĕнеке-хаçатсем нумай илсе тăраççĕ. Клубра драма, хор,

музыка, физкультура тата ытти кружоксем ĕçлеççĕ, пирĕн ялта республикăри музыкăпа художество коллективĕсем те час-часах пулаççĕ, колхозниксем кун сиктерсе кино пăхаççĕ. Çĕрĕç культурине малалла ӳстерсе пыма, çутçанталăка улăштарса çĕнетмелли сталинла аслă плана ăнăçлăн пурнăçлама колхозниксем тĕрлĕ кружоксенче малта пыракан мичуринла агробиологи наукине, агротехникăна вĕренеççĕ.

Çĕнĕ вăхăт çĕнĕлле ĕçлеме хушать. Пурнăç хăвăрт улшăнса пырать, çĕнĕ çынсем ӳссе çитĕнеççĕ. 3—5 çул каярах Валя Григорьева комсомолка ытти çамрăк хĕр ачасенчен нимĕнпе те уйрăлса тăман пулсан, халĕ вăл—Социализмла Ĕç Геройĕ. Мĕнле пысăк ӳсĕм! Вăл халĕ колхоз клубĕнче именсе лармасть, час-часах сцена çинчи трибуна умне тăрса докладсем туса парать. Кун пек тĕслĕхсем пĕрре кăна мар.

Халĕ историллĕ кунсенче е революциллĕ праçниксенче кăна докладсем туса пани çителĕксĕр. Халĕ колхозниксен тавракурăмĕпе культури пысăк. Çаксене пурне те шута илсе, эпир иртнĕ çул ял клубĕ çумĕнче яланах ĕçлекен лекторсен группине организацилерĕмĕр. Çакна эпир лекцисене вăхăтран-вăхăта иртерес шутпа мар, тăтăшах иртерес тесе турăмăр. Малтанлăха лекторсен группинче пурĕ 14 лекторччĕ. Вĕсен хисепне çичĕ çул вĕренмелли шкулта ĕçлекен учительсем, агроном, ял Совет председателĕ, «Дружба» тата «Заря» колхозсен председателĕсем, медсестра кĕнĕ. Кăçал лекторсен шутне эпир вăйлă тырпул мастерĕсене кĕртрĕмĕр, мĕншĕн тесен вĕсем хăйсен ĕçĕнчи ӳсĕмсем тата опытсем çинчен тĕплĕн каласа параççĕ. Çапла вара лекторсен группинче халĕ 20 çын шутланать. Халĕ эпир историллĕ кунсемпе праçник çинчен кăна мар (вĕсем çинчен калани те паха), совет наукин çитĕнĕвĕсем, политикăпа хуçалăх ыйтăвĕсем çинчен лекцисемпе докладсем иртеретпĕр. Ял хуçалăх наукин çитĕнĕвĕсем тата ял хуçалăх умĕнче тăракан задачăсемпе политика ыйтăвĕсем çинчен И. Г. Григорьев, С. И. Галкин, С. В. Венедиктов, В. С. Григорьева, К. Н. Николаев, В. Т. Тимофеев, Г. И. Иванов лекторсем докладсемпе лекцисем вулаççĕ, А. Ф. Аристовская лектор историллĕ кунсем тата совет халăхĕн праçникĕсем çинчен, лекторсен группинче тăракан учительница Л. П. Порфирьева мичуринла агробиологи, наукăпа культура, литературăпа искусство ыйтăвĕсемпе лекцисем вулаççĕ. Пирĕн халĕ

эрнере пĕр хутран кая мар лекци е доклад ирттересси йăлана кĕнĕ.

Кăçал тырпул пухса кĕртме тытăниччен пирĕн лекторсем колхозниксем хушшинче 30 лекци ытла вуларĕç. Мĕнле лекцисем вуланă-ха эпир? Хăш-пĕрисене эпĕ каласа парасшăн: Хĕвел е Уйăх тĕттĕмленни мĕнрен килни; Çутçанталăкри хăрушă явленисем; Этем пуçланса кайни; Планетăсем çинче пурнăç пур-и; Атом тата атом ăшĕнчи энерги; Тĕн тата унăн йăлисемпе уявĕсем пуçланса кайни тата вĕсен сиенĕ çинчен лекцисем вуланă. Паллах, çамрăксене воспитани парас ыйтăва та манса хăварман, ку тĕлĕшпе çак темăсемпе лекцисем вуланă: Юлташлăхпа туслăх; Шкул тата çемье; Совет халăхĕн патриотизмĕн çăлкуçĕ тата ыттисем те. Ял хуçалăх ыйтăвĕсемпе, сăмахран: Колхозра курăк акса тумалли çĕрĕç системи; Удобренисемпе пĕлсе усă курни — тырпул тухăçлăхне ӳстермелли майсенчен пĕри; Çутçанталăка улăштарса çĕнетмелли сталинла план çинчен тата ытти ыйтусемпе те лекцисем вуланă. Çак лекцисемсĕр пуçне, ял хуçалăх ыйтăвĕсем пирки партипе правительство йышăннă постановленисем; историллĕ кунсем, совет халăхĕн уявĕсем; И. В. Сталин юлташ 70 çул тултарни; Чăваш республикин 30 çул хушшинчи çитĕнĕвĕсем çинчен те докладсемпе лекцисем чылай ирттертĕмĕр.

Паллах, Тăван çĕршывра пулса иртекен ĕçсем, тĕнчери лару-тăру çинчен те лекцисем вулама манман. Китай халăх республики, Европăри демократиллĕ халăх республикисем, Азири халăхсем ирĕклĕхпе никама пăхăнманлăхшăн кĕрешни, уйрăмах Корейăри ĕçсем çинчен халăха лекцисемпе докладсем урлă ăнлантарса парассине лекторсен группи хăйĕн тивĕçĕ тесе шутланă тата шутлать те. Медицина ыйтăвĕсемпе районти больницăри тата участокри врач тăтăшах лекцисем вуласа параççĕ. Ветеринари тата зоотехника ыйтăвĕсемпе лекцисене Зайцев ветеринар тата районта ĕçлекен специалистсем вулаççĕ. Пирĕн яла районтан тата республика центрĕнчен те лекци вулама килеççĕ.

Тырпул пухса кĕртме тытăнсан, эпир хамăр ĕçе уйхирте, итемре туса пытăмăр, паллах, çак хĕрӳ вăхăтра эпир вăрăм докладсемпе пысăк ыйтуллă лекцисем ирттермен. Ун чухне эпир 20—30 минута пыракан калаçусем ирттернĕ.

Пирĕн лекторсем докладсемпе калаçусене клубра, уйхирте кăна мар, радио тăрăх та ирттереççĕ.

Анчах пирĕн ĕçре пурте лайăх пулса пырать теме çук-ха. Эпир халиччен хăш-пĕр лекцисен пахалăхĕ çине тивĕçлĕ пек çаврăнса пăхман. Малашне, лекцисен пахалăхне ӳстерес шутпа, лекторсене хăйсен лекцийĕсен текстне çырса хатĕрлеме хушатпăр, ун хыççăн лекци текстне хамăр группăра сӳтсе-явмалла тăватпăр. Пĕр лекцие те текстне пăхса тухмасăр вулама ирĕк памастпăр.

Пирĕн лекторсен группине колхозсен правленийĕсем, ял Совечĕ тата колхозри пуçламăш парторганизаци кулленех ĕçре пулăшса пыраççĕ. Кварталта мĕнле лекцисем ирттермелли çинчен план тăватпăр, ăна активпа сӳтсе явнă хыççăн парторганизацинче пăхса тухса çирĕплететпĕр, çакăн хыççăн плана ял тата колхоз клубĕсене паратпăр. Организациллĕ ыйтусене пурне те клубсен заведующийĕсем туса ирттереççĕ.

Кулленхи ĕçре пире райсовет исполкомĕн культурăпа çутĕç пайĕ те яланах пулăшать. Лекцисен тематикине, уйрăм консультацисемпе методикăллă кăтартусем ярса парать.

Лекцисемпе докладсем, агитаци ĕçне кăтартуллă ирттерме ялта çав тери пысăк, вĕçĕ-хĕррисĕр анлă майсем пур.

Лектор вăл—Ленин—Сталин партийĕ умĕнче ответлă çын. Колхозниксен анлă массине коммунистла воспитани парас, парти идейине пурнăçа кĕртес, ăна массăсен ăстăнне кĕртес тесен, лекторăн хăйĕн нумай пĕлмелле, куллен вĕренмелле, парти идейине ĕç çыннисем патне çитерессишĕн пĕтĕм вăйран тăрăшмалла.

Лектор ĕçĕ — ответлă, пысăк та хисеплĕ ĕç. Çак ĕçе эпир пĕтĕм вăйпа тăрăшса тата чунтан-чĕререн юратса туса пыратпăр.

**А. МЯСНИКОВА,**
**лекторсен группин руководителĕ.**

## ЯЛТИ ЙӖРКЕЛӖХ КУЛЬТУРӐРАН КИЛЕТ

Чупай ял Советне «Дружба» тата «Заря» колхозсем кӗреҫҫӗ. Вӗсем тӗреклӗ тата районта малта пыракан колхозсем. Вӑйлӑ тырпул туса илес тата выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе те вӗсем малти ретре пыраҫҫӗ. Ял Совет территорийӗнче икӗ электростанци, икӗ тимӗрҫ лаҫҫи, акушер пункчӗпе трахома пункчӗ, Паттире пуҫламӑш шкул, Чупайра ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкул, ял клубӗ тата колхоз клубӗ пур, радиоузелпа телефон станцийӗ ӗҫлеҫҫӗ. «Заря» колхозра кирпӗч производстви, «Дружба» колхозра 3 автомашина, гараж, механизациленӗ зерносушилка, витнӗ итемсем пур.

Ял Совечӗ хӑйӗн территорийӗнче йӗркелӗхпе типтерлӗх тӑвассишӗн кӗрешет. Мӗнле майпа пурнӑҫласа пыратпӑр-ха эпир ҫак ӗҫе? Ял Совечӗ хӑйӗн пӗтӗм ӗҫне ӗҫ ҫынни депутачӗсемпе ялти актив урлӑ колхозниксене вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи сталинла пилӗк ҫуллӑх плана пурнӑҫлас ӗҫе мобилизацилет. Пилӗк ҫуллӑх плана пурнӑҫлассишӗн мӗнле кӗрешмеллине пирӗн депутатсем ӗҫпе кӑтартса парӗҫ. Ял Совечӗн депутачӗ К. Н. Николаев юлташ вӑйлӑ тырпулшӑн тивӗҫлипе кӗрешсе Социализмла Ӗҫ Геройӗн ятне илчӗ, 5 депутат Ленин орденӗ, пӗр депутат Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗ, пӗр депутат «Ӗҫри хастарлӑхшӑн» медаль илме тивӗҫлӗ пулчӗҫ. Ӗҫри ҫитӗнӳсемшӗн икӗ депутата Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумӗ Хисеп грамоти парса наградӑларӗ.

Пирӗн ял Совечӗ ҫумӗнче яланхи комиссисем 4 ӗҫлеҫҫӗ. Ял хуҫалӑх комиссине С. И. Галкин юлташ председатель пулса ертсе пырать. Комисси членӗсем ял хуҫалӑхӗнчи пӗр-пӗр ӗҫ мӗнле пулса пынине тӗрӗслеҫҫӗ кӑна мар, тата колхозниксем хушшинче лекцисемпе докладсем тата калаҫусем те ирттереҫҫӗ. Ял хуҫалӑх комиссийӗн членӗсем тырпул пухса кӗртнин пахалӑхне тӗрӗслеҫҫӗ, колхозниксене государство умӗнчи обязательствӑсене вӑхӑтра пурнӑҫлас ӗҫе мобилизацилеҫҫӗ.



Чупай ял Совечĕн председателĕ
Семен Венедиктович Венедиктов.

Ял Совечĕ çумĕнче çул-йĕр тата благоустройство комиссийĕ ĕçлет. Çак комиссие ял Совечĕн депутачĕ, вăйлă тырпул туса илнĕшĕн Ленин орденĕ илнĕ И. Г. Григорьев юлташ ертсе пырать. Комисси членĕсем тата унăн председателĕ — ялти паллă лекторсемпе докладчиксем. Вĕсем час-часах колхозлă ялăн культури мĕнле пулмалли çинчен халăх хушшинче докладсемпе калаçусем ирттереççĕ; колхозлă яла культурăллă тата илемлĕ тăвассишĕн кĕрешеççĕ. Кăçал комисси пуçарнипе Чупайра пушар деповĕ туса пĕтеретпĕр. 10 вырăнта пĕве тунă, çĕнĕрен 11 çăл алтнă, кĕперсене, ял Совечĕн территорийĕнчи çулсене юсанă е çĕнĕрен тунă, ялта 600 метр тăршшĕ тротуар сарнă. Уй-хирпе итемри тырпула, колхоз çурт-йĕрĕсене сыхлас ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Урамсене йывăç лартас, сад тăвас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем тунă. Ялта халĕ йĕркелĕх тăвас, вут-кăвартан сыхланас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнтăмăр: тапак туртакансем валли урамра уйрăм вырăнсем пур, колхозниксен çурчĕсем, обществăллă çурт-йĕрсемпе предприятисем умĕнче каткапа шыв лартнă, вут-кăварпа кĕрешмелли инвентарьсем çакăнса тăраççĕ.

Культурăпа çутĕç комиссине М. Д. Дмитриева юлташ ертсе пырать. Ку комисси клубсене, шкулсене, медицина учрежденийĕсене йĕркеллĕ ĕçлеттерме тăрăшать. «Ялти лайăх ĕçлекен вулав çурчĕ, библиотека, клуб—кашни Совет̆ан чыслă тивĕçĕ пулмалла», тенĕ М. И. Калинин. Çакна эпир яланах асра тытатпăр. Ялти клубăн ĕç планне пăхса тухса çирĕплететпĕр. Паллах, колхозниксен культури ялти клуб ĕçĕнчен те нумай килет. 4—5 çул каялла ял Совечĕн хулиганла ĕçсем тăвакансене хирĕç нумай ĕçлеме тиветчĕ. Халĕ ун пек киревсĕр тĕслĕхсем пĕтрĕç. Çамрăксем те, ваттисем те клуба лекцисемпе докладсем итлеме час-часах пухăнаççĕ, постановкăсемпе концертсем итлеме пыраççĕ, шахматла, шашкăлла, бильярдла выляççĕ, спорт ăмăртăвĕсем ирттереççĕ.

Кĕскен каласан, ял Советĕнчи колхозниксем пушă вăхăта клубра культурăллă канса ирттереççĕ. Клуб 22 тĕслĕ хаçатсемпе журналсем илсе тăрать. Библиотекăра 1000 кĕнеке ытла шутланать. Мĕн çинчен вулас тетĕн—çавна вулама пулать. Клубрах радиопа телефон пур. Кун сиктерсе кино куратпăр. Халĕ ялти клуб библиотекинчен кĕнеке илсе вуламан пĕр колхозник та çук. Çакна шута илсе, колхозсем пирĕн клуб валли 5 пин тенкĕлĕх çĕнĕрен кĕнеке илме йышăнчĕç. Клуб çумĕнче лекторсен группи пур. Вăл ялти интеллигенцие, вăйлă тыр-пул мастерĕсене пĕрлештерсе тăрать. Эпир лекцисемпе докладсене клубра ирттернисĕр пуçне, радио тăрăх та, колхозниксем ĕçленĕ вырăнта та вуласа паратпăр (кашни колхозник çуртĕнчех радио пур). Колхозра ĕçсем мĕнле пулса пынине тăтăшах радио тăрăх пĕлтеретпĕр, хăш-пĕр кахалсене е ĕçе çиелтен тăвакансене питлетпĕр.

Халĕ эпир шкулсене, клуба, медицина учрежденийĕсене юсаса пĕтертĕмĕр, вĕсем валли çителĕклĕ таран вутă хатĕрлерĕмĕр. Çак учрежденисем кĕркуннехи тата хĕллехи вăхăтра ĕçлеме хатĕрленсе çитрĕç.

Çапла вара колхозниксене пуян та культурăллă пурăнакан тăвас задачăна эпир ăнăçлă пурнăçласа пыратпăр.

**С. ВЕНЕДИКТОВ,**
**Чупай ял Совечĕн председателĕ.**

## ВАЙЛĂ ТЫРПУЛШĂН КĔРЕШЕТПĔР

Эпĕ 4 çул ĕнтĕ «Дружба» колхозăн 2-мĕш уй-хир бригадине ертсе пыратăп. Кăçал манăн бригада 37 гектар çинчи ыраша кĕске вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртрĕ. Ыраша МСА—1100 маркăллă молотилкăпа çапса тирпейлерĕмĕр, государствăна тырă парса татрăмăр, 40 гектар çинчи çурхи тырăсене пĕр тăккаламасăр пухса кĕртрĕмĕр. Ĕç ăнăçлă пырать. Кулленхи ĕç нормине тултарайман е тăккаласа ĕçлекен колхозник манăн бригадăра пĕр çын та çук. Манăн бригада, тĕштырăсемсĕр пуçне, 15 гектар вăрлăхлăх клевер, 20 гектар люцерна, 5 гектар çĕрулмипе пахча çимĕçĕ пухса кĕртрĕ.

Иртнĕ çул вăйлă тырпул туса илнĕшĕн манăн бригада членĕ В. А. Сидорова юлташ Ленин орденĕ тата 4 çын «Ĕçри хастарлăхшăн» медаль илме тивĕçлĕ пулчĕç. Кăçал орденсемпе медальсем илекенсен шучĕ ытларах пуласса шанса ĕçлетпĕр. Пирĕн çĕршыври ĕç çынни хăй ирĕклĕ çын пулнине пĕлет, вăл общественнăй деятель пулса тăрать. «Вăл лайăх ĕçлет пулсан, обществăна мĕн пама пултарнине парать пулсан — вăл ĕç геройĕ, вăл мухтавпа чапа тухнă çын пулса тăрать», тесе вĕрентет пире çулпуçăмăр аслă Сталин юлташ. Çак сăмахсем пире хавхалантараççĕ, ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума вăй параççĕ.

Эпир хамăрăн бригадăра Социализмла Ĕç Геройĕсем К. Н. Николаевпа В. С. Григорьева юлташсем тата ытти вăйлă тырпул маçтерĕсем хăйсем мĕнле майпа вăйлă тырпул туса илни çинчен каласа панине тимлĕн итлетпĕр. Вĕсем пек ĕçлеме пултаратпăр-и эпир?—Пултаратпăр, тата ĕçлемелле те,—теççĕ манăн бригада членĕсем.

Хамăн бригадăра эпĕ политикăллă-массăллă тата культурăллă ĕçе те пикенсех туса пыратăп. М. А. Кузнецова агитатор тата клуб заведующийĕ Н. И. Иванов калаçусем irttereççĕ, «боевой листоксем» кăлараççĕ. Лайăх ĕçлекенсене Хисеп хăми çине çыратпăр. Каннă вăхăтра кĕнеке-хаçат вулатпăр, докладсемпе лекцисем итлетпĕр.

Политинформаци вăхăтĕнче ҳалĕ колхозниксем уйрăмах Корейăри лару-тăрупа интересленеççĕ. Америка агрессорĕсем ирĕке юратакан тата ĕçчен Корея халăхне тапăнни пире чунтан-чĕререн тарăхтарать. Хамăрăн Тăван çĕршыв миршĕн паттăррăн кĕрешнĕшĕн эпир савăнатпăр, хамăр çĕршыв тĕрекне çирĕплетессишĕн кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлетпĕр.

**Н. СИДОРОВ,**

«Дружба» колхозри 2-мĕш уй-хир бригадин бригадирĕ.

## КЛУБ — КУЛЬТУРĂЛЛĂ ЦЕНТР

Совет Çарĕнчен таврăнсан, 1948 çулта, мана клуб заведующийĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартрĕç, ял Советĕнче клуб мĕнле ĕçсем туса пымалли çинчен каласа пачĕç.

Малтанлăха çак ĕç маншăн питĕ йывăр пек туйăнчĕ. Анчах колхоз председателĕ И. Г. Григорьев юлташ тата ялти актив мана яланах пулăшса пыма пулни хавхалантарчĕ. Парти организацийĕн секретарĕ В. Т. Тимофеев юлташ ĕç планĕ тума пулăшрĕ, вăл плана ял Советĕнче сӳтсе явнă хыççăн çирĕплетрĕç.

Пирĕн чи паха ĕçсенчен пĕри вăл — парти организацийĕпе ял Советне ĕç çыннисене коммунистла воспитани парас ĕçре пулăшса пырасси тата колхозниксене хуçалăхпа политикăллă задачăсене пурнăçлама мобилизацилес ĕçре куллен пулăшасси пулса тăрать. Партипе комсомол, ял Совечĕпе колхоз правленийĕ тата шкулта, медпунктра ĕçлекенсем план тăрăх пăхнă мероприятисене пурнăçлама яланах пулăшса пыраççĕ.

Пирĕн клуб çумĕнче лекторсен группи ĕçлет, унта 20 лектор тăрать. Лекторсен группи эрнере пĕрре-иккĕрен кая мар ял клубĕнче тата «Заря» колхоз клубĕнче е колхозниксем ĕçленĕ çĕрте лекцисемпе докладсем туса парать. Кунсăр пуçне, эпир хăш чухне радио тăрăх та лекцисем вулатпăр. Пирĕн лекцисем тĕрлĕ ыйтусемпе пулса иртеççĕ, мĕншĕн тесен колхозниксен культурăллă ӳсĕмĕ пысăк. Эпир ял хуçалăх ыйтăвĕсемпе тата наукăпа çутĕç ыйтăвĕсемпе лекцисем ытларах иртteретпĕр.

Лекцисемпе докладсем ăнăçлă иртчĕр тесе, эпĕ хамăн ĕçе çапла тăватăп: чи малтанах, мĕнле лекцисемпе докладсене хăçан ирттермеллине кăтартса çырнă плана ялти клуба, колхоз правленине, ял Совечĕн канцелярине курăнмалла вырăна çакса хуратăп. Лекци е доклад пулас умĕн пĕр кун маларах урама, пĕлтерӳсем çыпăçтарма тунă уйрăм хăма çине, лекци мĕнле темăпа пулмаллине, ăна кам вуланине тата ăçта, хăçан пухăнмаллине кăтарт-



Чупай ял клубĕн заведующийĕ
Николай Иванович Иванов.

са пĕлтерӳ çырса хуратăп. Пирĕн ялта кашни çуртах радио кĕртнĕ, колхозăн радиоузел пур. Радио тăрăх пĕлтерӳсем пама уйрăм вăхăт уйăрнă. Çак вăхăтра вара пирĕн ятарласа уйăрнă çын — диктор — лекцие хăш вăхăтра тата ăçта пухăнмалли çинчен пĕлтерет. Лекци пулса иртмелли вырăна, лектора кирлĕ наглянăй пособисене (картăсем, альбомсем, диаграммăсем, çырса кăтартмалли хăма) хам тупса хатĕрлетĕп. Колхозниксем лекци итлеме яланах вăхăтра, пĕр харăс пухăнаççĕ.

Лекцисемпе докладсем ирттернисĕр пуçне, эпир ял клубĕнче ытти мероприятисене те анлăн туса пыратпăр. Сăмахран, пирĕн хор, драма, физкультурăпа спорт, литература кружокĕсем лайăх ĕçлеççĕ. Час-часах эпир лекци е доклад хыççăн пĕр актлă пьеса е пысăках мар концерт паратпăр, хăш чухне колхозри физкультурниксен выступленийĕсене организацилетпĕр. Паллах, çуллахи хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче лекци е доклад хыççăн постановкăсемпе концертсем памастпăр, ун пек эпир хĕллепе кĕркунне кăна тăватпăр. Колхозниксем хирте ĕçленĕ вăхăтра пысăках мар докладсемпе лекцисем кăна ирттеретпĕр.

Кăçал пирĕн клубра 40 хутчен кино пулса иртрĕ. Вăл картинăсене 5317 çын курнă. Кино умĕнхи калаçура часчасах фильм содержанийĕ çинчен каласа паратпăр. Ял хуçалăхĕ çинчен е мичуринла агробиологипе çыхăнса тăракан фильм пулсан, фильм çинчен ăнлантарса доклад туса паратпăр. Ку вара фильма тĕплĕн ăнланма май парать е фильм доклада тарăнрах ăнлантарать.

Лекторсемсĕр пуçне, клуб ĕçне беседчиксем, агитаторсем, «боевой листок» редакторĕсем хутшăнаççĕ. Вĕсен шучĕ 70 çынна çитет. Беседчиксемпе агитаторсене эпир бригадăсем, выльăх-чĕрлĕх фермисем, техникăлла культурăсене пăхса çитĕнтерекенсен звенисем-çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем кашни кунах политинформаци ирттереççĕ, хаçат çинчи статьясене вуласа параççĕ. Кашни бригадăрах мĕнле ĕçленине кăтартакан тата Хисеп хăмисем тунă. Унта эпир чи лайăх стахановецсене çыратпăр, икĕ кунта пĕрре «боевой листок» тухса тăрать.

Халĕ клуб тата унăн активĕ вăхăтра тырпул пухса кĕртес, государствăна ял хуçалăх продукчĕсемпе выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем вăхăтра парса татас ĕçе колхозниксене мобилизацилес тĕлĕшпе ĕçлет. Клуб активне уй-хир бригадисенче, авăн çапакан тата транспорт бригадисенче культурăпа çутĕç ĕçне туса пыма уйăртăмăр; вĕсем унта агитаципе массăллă ĕçе кăна мар, производствăри ĕçе те хутшăнса, пример кăтартса ĕçлеççĕ.

**Н. ИВАНОВ,**

**Чупай ял клубĕн заведующийĕ.**

## ВĂЙЛĂ ТЫРПУЛ МАСТЕРĔСЕН ĔÇРИ ОПЫТНЕ ВĔРЕНЕТПĔР

Пирĕн «Заря» колхоз республикăра малта пыракан «Дружба» колхозпа юнашар. Астăватăп, 7—8 çул каялла «Дружба» колхоз ял хуçалăх ĕçĕсене кая юлса туса пыракансенчен пĕриччĕ. «Дружба» колхоз аталанăвне, вăл çулран çул тĕрекленсе, пуянланса пынине эпĕ яланах сăнаса пытăм. Мĕнре-ха «Дружба» колхозăн çитĕнĕвĕ? Ман шутпа, çак колхозăн çитĕнĕвĕ вăл — Ял хуçалăх артелĕн уставне пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пынинче, ял хуçалăх наукин çитĕнĕвĕсене практикăра, колхоз ĕçĕнче пурнăçласа пыма пĕлнинче. «Дружба» колхоз председателĕ И. Г. Григорьев юлташ хăй таврa актива пĕтĕçтерме, актив урлă вара мĕнпур колхозниксене умра тăракан задачăсене пурнăçлас ĕçе мобилизацилеме пĕлет.

«Дружба» колхозăн тепĕр уйрăмлăхĕ вăл — политикăллă-массăллă тата культурăллă ĕçе кашни кун туса пынинче. Кунта ял клубĕ нихçан та пушă мар: клубра эрнере пĕрререн кая мар лекцисем вулаççĕ, спектакль, кино, концерт кăтартаççĕ тата ытти массăллă-культурăллă ĕçе планпа туса пыраççĕ. Клуб çумĕнче ялан ĕçлекен лекторсен группи пур. Ку группăра эпĕ хам та тăратăп. Çавăн пекех пирĕн ялти учительсем А. И. Иванов, А. Ф. Аристовская, ветеринар Н. В. Зайцев юлташсем те лекторсем пулса ĕçлеççĕ.

«Дружба» колхозăн ĕçĕ пирĕншĕн те лайăх пример пулса тăрать. Мана «Заря» колхоз председательне суйланă хыççăн, эпĕ хам умма «Дружба» колхоз председателĕ И. Г. Григорьев юлташ пек ĕçлес задача лартрăм. Тӳрех калас пулать, пирĕн «Заря» колхоз та юлса пыракан колхозсен шутĕнче мар. Чăн та, тырпул тухăçĕ енчен эпир вĕсене çитейместпĕр-ха. Анчах эпир те чылай пысăк çитĕнӳсем турăмăр. Ял хуçалăх ĕçĕсене вăхăтра тата лайăх пахалăхпа туса пыратпăр, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçлатпăр. Иртнĕ çул



Чупай ял Советне кӗрекен
„Заря“ колхоз председателӗ
Семен Иванович Галкин.

Уставпа пăхнă фондсене тунă хыççăн колхозниксене кашни ĕçкунĕ пуçне 3 килограма яхăн тĕштырă валеççе патăмăр. Вăйлă тырпул туса илнĕшĕн 5 колхозник правительство наградине илме тивĕçлĕ пулчĕç. Кăçал та пирĕн колхозăн тырпул тухăçлăхĕ иртнĕ çулхинчен кая мар. Тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçе вăхăтра, лайăх пахалăхпа пурнăçларăмăр.

«Заря» колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе мухтанма пултарать. Общество выльăх-чĕрлĕхне ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана пирĕн колхоз срокчен ирттерсе пурнăçларĕ. Акă тĕслĕхсем: ĕне выльăх ĕрчетмелли плана 119 процент, сурăхсем ĕрчетмелли плана 122 процент, сыснасем ĕрчетмелли плана 104 процент, кайăк-кĕшĕк ĕрчетмелли плана 109 процент, лаша ĕрчетмелли плана 100 процент тултартăмăр.

Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли çулталăкри плана та эпир срокчен тултартăмăр. Юлашки

уйăхра кăна колхоз выльăх-чĕрлĕхпе унăн продукчĕсене сутса 11431 тенкĕ тупăш илчĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси вăл выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрленинчен тата выльăх-чĕрлĕхе хĕлле усрама витесемпе ферма çурт-йĕрсене вăхăтра юсаса йĕркеленинчен нумай килет. Нумай çул ӳсекен курăксем тата пахча çимĕçĕ акмалли плана ирттерсе тултартăмăр. Утă, утăлăх викăпа сĕлĕ акса вĕсене вăхăтра тата лайăх пухса тирпейлерĕмĕр. Выльăх апачĕ валли 730 лав милĕк, 31 лав вĕлтĕренпе армути пухса типĕтсе хутăмăр. Силос хывмалли плана тултартăмăр.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çитĕнӳсем пирĕн мĕнрен килеççĕ-ха? Фермăсенче опытлă, хăйсен ĕçне лайăх пĕлекен тата ĕçе юратакан çынсем ĕçлеççĕ. Иртнĕ хĕлле вĕсем зоотехника кружокĕнче вĕренчĕç. Унсăр пуçне, эпир хамăр колхоз клубĕнче эрнере пĕрререн кая мар лекцисемпе докладсем ирттеретпĕр. Иртнĕ ултă уйăх хушшинче эпир политика, ял хуçалăхĕ тата наука ыйтăвĕсемпе пурĕ 20 лекципе доклад ирттертĕмĕр.

Қалас пулать, апла пулсан та лекцисемпе докладсем ирттерес тĕлĕшпе пирĕн колхозра ĕç кирлĕ пек пулса пырать теме пултараймастпăр-ха. Сăмахран, естественно-научнăй тата тĕне хирĕç темăсемпе пирĕн лекцисем çителĕксĕр пулса иртеççĕ. Унсăр пуçне, ял хуçалăх пĕлĕвĕсене сарас тĕлĕшпе эпир цикллă лекцисем ирттермен. Çапла вара колхозниксем тулли ял хуçалăх пĕлĕвĕсене илме пултарайман. Çак çитменлĕхсене эпир хамăр та пĕлетпĕр, малашнехи ĕçре вĕсене пĕтерме тăрăшатпăр.

Лекцилле пропаганда ĕçне йĕркеллĕ, план тăрăх туса пырас тесе, эпир колхоз клубне юсарăмăр, хĕле валли вутă çителĕклĕ хатĕрлерĕмĕр. Қолхоз клубĕнче заведующи пулса ĕçлеме пултаруллă колхозника, вăтам шкултан вĕренсе тухнă Теплов юлташа уйăртăмăр. Вăл колхоз производствинче ĕçленипе пĕрлех культурăллă-массăллă ĕçе те туса пырать.

Қолхоз клубĕнчи ĕçе йĕркелесе пынăшăн, колхозниксен пухăвĕ йышăннă тăрăх, Теплов юлташа уйăха 10 ĕçкунĕ паратпăр.

**С. ГАЛКИН,**
**Чупай ял Советĕнчи**
**«Заря» колхоз председателĕ.**

## ПИРĔН ХИСЕПЛĔ ТИВĔÇ

Чупай ял клубĕ çумĕнче ялти лекторсен группине организацилесен, эпĕ савăнсах группа членне кĕтĕм. Манпа пĕрлех лекторсен группине ял хуçалăх ĕçĕпе политикăна лайăх пĕлекен «Заря» колхоз председательне С. И. Галкина, колхозри ветеринара Н. В. Зайцева тата пирĕн ялти шкул учительне А. И. Иванова илчĕç. Лекторсен группи план туса пире те уйрăм заданисем пачĕ. Эпир халăх хушшинче лекцисемпе докладсем тăвас ĕçе чунтанчĕререн савăнса тытăнтăмăр. Чăн та, лекцисемпе докладсем урлă колхозниксен пĕлĕвне ӳстерес, вĕсене тĕнчери лару-тăру çинчен, пирĕн аслă Тăван çĕршывра пулса иртнĕ тата халĕ пулса иртекен ĕçсем çинчен ăнлантарса парас ĕçрен хисеплĕ ĕç тата мĕн пур-ха? Эпир, Патти ялĕнчи лекторсем, çакна яланах асра тытса ĕçлетпĕр. Лекцисемпе докладсем план тăрăх вăхăтра пулса пыччăр тесен, колхозниксене пухăнмалли вырăн кăмăллă, хĕллехи вăхăтра ăшă та çутă пулмалла. Çак условисене «Заря» колхоз членĕсем пире пурне те туса параççĕ.

Иртнĕултă уйăх хушшинче эпир пурĕ 20 лекци вуласа патăмăр. Вăл шута обществăллă-политикăллă, ял хуçалăх, наука ыйтăвĕсемпе вуланă лекцисем кĕреççĕ. Сăмахран, лектор А. И. Иванов юлташ, И. В. Мичурин — çутçанталăка улăштарса çĕнетекен çын, пĕтĕм тĕнчери ĕç çыннисен çулпуçĕ И. В. Сталин 70 çул тултарни, тĕнчери лару-тăру çинчен, В. И. Ленин — большевиксен партине тата Совет государствине тăваканĕ тата ытти темăсемпе те, пурĕ 6 лекци, вуларĕ; лектор С. И. Галкин юлташ иртнĕ ултă уйăх хушшинче И. В. Сталин — большевиксен партине тăваканĕ тата ертсе пыраканĕ, Чăваш республики 30 çул хушшинче хуçалăхпа культура тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсем, çуркунне колхозра тумалли агротехникăлла мероприятисем тата вĕсене пурнăçласси, çутçанталăка улăштарса çĕнетмелли сталинла план; СССР Министрĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ тыр-



Лектор Александра Флегонтовна
Аристовская

пула пухса кěртесси тата ял хуçалăх продукчěсене хатěрлесси çинчен йышăннă постановлени тата ытти темăсемпе те вуларě. Эпě хам та 5 лекци вуларăм.

Чупайри лекторсен группи пирěн колхоза ытти лекторсене те ярать. Кунсăр пуçне, докладсем тума ялти пултаруллă çынсене хутшăнтаратпăр, вěсене доклад тума мěнле хатěрленмеллине, ăçтан материалсем тупмаллине кăтартса паратпăр. Сăмахран, СССР Верховнăй Советне суйлама хатěрленнě вăхăтра В. Я. Яковлевпа А. И. Теплов агитаторсем лайăх ěçлерěç, вěсем суйлавçăсем хушшинче калаçусем ирттерме тěплěн хатěрленетчěç, вěсене килěшўллě тата ăнланмалла ирттеретчěç. Эпир вěсене куллен пулăшса пытăмăр. Вěсем хăйсем те тимлěн вěренеççě. Çавна май вěсем ўсни те палăрать. Теплов юлташ халě пысăках мар докладсене хатěрленсе ирттерме пултарать. Кăçал вăл пурě 3 доклад турě, Корейăри ěçсем çинчен ăнланмалла калаçусем ирттерет, уйрăмах унăн докладне çамрăксем юратса итлеççě. Халě эпир ăна колхоз клубěн заведующийě пулма уйăртăмăр.

Клубра та Теплов юлташ лайăх ĕçлет. Кăçал эпир 23 хутчен çамрăксен вечерне ирттертĕмĕр. Вечер умĕн ялапах пысăках мар докладсем е калаçусем ирттеретпĕр. Малашне вечерсем умĕн çакăн пек темăсемпе докладсем ирттерме шутлатпăр: Демократиллĕ Китай халăх республики, Корея тата унти ĕçсем, Вьетнам халăхĕ ирĕклĕхшĕн кĕрешни, Малайăри тата Бирмăри ĕçсем, унсăр пуçне, Болгари, Чехословаки, Польша, Венгри, Албани халăх республикисен çитĕнĕвĕсем çинчен ăнлантарса парасшăн.

Лекцисемпе докладсене хатĕрленĕ чухне мĕнле материалсемпе усă курасси, вĕсене мĕнле ирттересси çинчен пĕр-пĕринпе канашлатпăр.

Пирĕн клубра кăçал 28 хутчен кино кăтартнă, кино умĕн те пысăках мар докладсемпе калаçусем ирттеретпĕр. Клуб çумĕнче драма кружокĕ организацилерĕмĕр, вăл кăçал 3 спектакль лартса пачĕ.

Халĕ пĕтĕм политикăллă-массăллă ĕçе эпир колхозниксем ĕçленĕ çĕрте ирттеретпĕр. Нумаях пулмасть авăн çапнă çĕрте республикăри лекци бюровĕн лекторĕ Никитин юлташ Корея тата унти ĕçсем çинчен итемрех лекци вуласа пачĕ, лекцие колхозниксем пысăк тимлĕхпе итлерĕç.

Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем Корейăри ларутăру çинчен пĕлесшĕн. Халĕ пирĕн колхозниксем хушшинче 16 агитатор ĕçлет. Колхозниксем вĕсенчен, чи малтанах, Корея çинчен каласа пама ыйтаççĕ.

Нумай çул хушши Япони пусмăрĕ айĕнче асап курнă Корея халăхне каллех Америка империалисчĕсем тапăнни, мирлĕ хуласемпе ялсем çине Америка вăрă-хурахĕсем бомбăсем пăрахни, айăпсăр мирлĕ халăх нумай асап тÿсни пирĕн колхозниксене кÿрентерсе тарăхтарать.

— Эпир Америка агрессорĕсене халех Корейăран тухса кайма ыйтатпăр,—теççĕ колхозниксем.

Колхозра халĕ тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырăпа ытти ял хуçалăх продукчĕсем парас ĕç вĕçленсе пырать. Пирĕн колхозниксем кунĕн-çĕрĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

— Пирĕн пĕр тĕллев—тырпула тирпейлĕ пухса кĕртсе, хамăр çĕршыв вăй-хăватне татах та ытларах çирĕплетесси,—теççĕ колхозниксем.

**А. АРИСТОВСКАЯ,**
**Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учительници, орденоноска.**

## ПЕР ÇЕМЬЕРИ ЛЕКТОРСЕМ

Чупай ял Советне кĕрекен Патти ялĕнче Василий Андреевич Зайцев çемйи пур. 1917 çулччен В. А. Зайцев ытла та чухăн пурăннине пула хут вĕренмен. Вăл революциччен Мелекесре (халĕ Ульяновск облаçне кĕрет) Лепешкин улпут патĕнче тарçăра пурăннă. Октябрьти революци тата граждан вăрçи çулĕсенче вăл алла пăшал тытса совет влаçне хÿтĕленĕ. Революци хыççăн 10 çул иртсен, Василий Андреевич ликпункта çÿресе вуламаçырма вĕреннĕ, ялти активистсенчен пĕри пулса тăнă.

1929 çулта Патти ялĕнчи «Заря» колхоз организацилекенсен шутĕнче Василий Андреевич та пулнă. Совет влаçĕ вăхăтĕнче унăн 4 ачи аслă тата вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă. Аслă ывăлĕ Николай Васильевич Зайцев 15 çул ĕнтĕ колхозри ветеринари фельдшерĕ пулса ĕçлет. Аслă Отечественнăй вăрçăра та вăл фельдшер пулнă, нимĕç фашисчĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешнĕшĕн правительство ăна 7 хутчен орденсемпе медальсем парса наградăланă. Аслă Отечественнăй вăрçă совет халăхĕ çĕнтернипе вĕçленнĕ хыççăн Николай Васильевич каллех тăван колхоза таврăннă та хăйĕн ĕçне тытăннă. Халĕ вăл ялти лекторсен группинчи хастарлă лекторсенчен пĕри.

Василий Андреевичăн тепĕр ывăлĕ — Михаил Васильевич, Чăвашсен педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă, халĕ ВКП(б) Муркаш райкомĕн секретарĕ пулса ĕçлет. Унăн та кăкăрĕ çинче орденпа медальсем ялтăраса тăраççĕ. Михаил Васильевич халăх хушшинче политикăллă тата наукăллă пĕлÿсене саракан паллă лектор шутланать.

Яков Васильевич Василий Андреевичăн виççĕмĕш ывăлĕ, Тутарсен педагогика институчĕн преподавателĕ, Аслă Отечественнăй вăрçăра вăл тăшмана хирĕç паттăррăн кĕрешнĕшĕн Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ, Хĕрлĕ Ялав орденĕ, Отечественнăй вăрçă орденĕ тата 4 медаль илме тивĕçлĕ пулнă.

Василий Андреевичӑн пӗр хӗр пулнӑ. Вӑл Вӑрмар районӗнчи Энӗшпуҫӗнчи 7 ҫул вӗренмелли шкулта учительница пулса ӗҫлет. Кунти вулав ҫурчӗн заведующийӗ Волков юлташ каласа панӑ тӑрӑх, Пелагея Васильевна чи лайӑх лекторсенчен пӗри шутланать.

Ҫапла ӗнтӗ, Сталинла Конституци панӑ тивӗҫпе усӑ курса, чухӑн хресчен ҫемйинче ҫуралса ӳснӗ ҫынсем аслӑ шкулсенчен вӗренсе тухса, колхозниксене наука тата политика пӗлӗвӗсене вӗрентес тӗлӗшпе хастарлӑн ӗҫлеҫҫӗ.

## ЧУПАЙСЕМ

Чупайри «Дружба» колхозăн конюхсем канмалли çуртра хĕрÿллĕ калаçу пырать. Калаçăва Совет Çарĕнчен канма таврăннă лейтенант Виноградов юлташ ирттерет.

Сĕтел çинче — паян илнĕ хаçатсем, стена çумне Корейăн пысăклатса ÿкернĕ карттине çакнă. Конюхсем хушшинче 70 çула çитнĕ Федор Алексеевич Алексеев юлташ та пур. Вĕсем пурте Виноградова лайăх пĕлеççĕ. Вăл Совет Çарне кайиччен ялти хастарлă çамрăксенчен пĕри пулнă, колхозра кăтартуллă ĕçленипе тата халăх хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе туса пынипе чапа тухнă. Вăл халĕ кĕске вăхăтлăха яла таврăнсан та халăх хушшинче ĕçлессине хăйĕн тивĕçĕ вырăнне хурать. Иртнĕ кун вăл выльăх-чĕрлĕх ферминче ĕçлекенсем патĕнче Корея çинчен доклад туса панă, паян конюхсем патне килнĕ.

Виноградов юлташ Корея халăх çарĕн главнăй командованийĕн пĕлтерĕвне каласа парать, çапăçусем ăçта пынине картă çинче кăтартать. Америка авиацийĕ Корейăн мирлĕ ялĕсемпе хулисем çине вăрă-хурахла тапăнни çинчен калать. Ун хыççăн вăл Корея халăх республикин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Хăрушăсăрлăх Советне янă обращени çинчен каланса тăрать.

...Америкăн вăрă-хурахла летчикĕсем Пхеньян хули çине бомбăсем пăрахнине пула пурăнакан 1200 çурт-йĕре, халăх больницине, политехнически института тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе пĕтернĕ. Сеул хули çине Америка авиацийĕ тапăннине пула 7 000 çын вилнĕ, нумай çын суранланнă.

— Гитлер фашисчĕсен вăрă-хурахла ĕçне Америка империалисчĕсем Корейăра туса пыраççĕ, вĕсем гитлерла вăрă-хурахсем мĕнле пĕтнине асра тытмаççĕ-шим вара? — ыйтрĕ ватă колхозник Алексеев юлташ,— вĕсем пĕтĕмпех çын сăн-сăпатне çухатнă çынсем пулĕ,— вĕçлерĕ хăй ыйтăвне старик.

— Ҫорея халăх ҫарĕ Америкăн чылай салтакĕсемпе офицерĕсене тыткăна илнĕ,— ответлерĕ Виноградов юлташ.— Америка салтакĕсемпе офицерĕсем — ҫын сăн-сăпатне ҫухатнă, укҫашăн сутăннă ҫынсем. Акă пĕр-икĕ тĕслĕх. Филадельфи ҫынни Холш Ҫленсо лейтенант, тыткăна лекнĕскер, допросра ҫапла каласа панă: вăл аслă шкулта вĕренме пăрахса ҫара хăй ирĕкĕпе кайнă. Шкулта вĕреннĕ чухне вăл вырăссен аслă писателĕсем Пушкин, Горький, Толстой ҫинчен пĕр сăмах та илтмен, Америкăн Драйзер, Марк Твэн писателĕсем мĕнле кĕнекесем ҫырни ҫинчен те пĕлмест. Ҫак вăрă-хурах аслă шкулта мĕне вĕреннĕ-ха? Бухгалтер пулма вĕреннĕ, хăйĕн дневникĕ ҫине вăл кашни кун мĕн чухлĕ доллар ăҫтан тупнине кăна ҫырса пынă.

Тепĕр тĕслĕх. Арнольд Питт артиллеристăн килне яма хатĕрленĕ ҫыруне тупнă. Ҫырура ҫак сăмахсем пур: «Вăрҫă ытла та йывăр, ҫапах та хăнăхас пулать. Унсăрăн укҫа тупма ҫук. Эпĕ кунтан хаклă япаласем ҫаклатса таврăнма ĕмĕтленетĕп». Анчах ҫак вăрă-хурахăн ĕмĕчĕ пурнăҫланман, вăл Ҫорейăра вилĕм тупнă.

Ҫакна ăнланас пулать: тинĕсри карапсем ҫинчи тупăсенчен пенипе е сывлăшран вăрă-хурахла бомбăсем пăрахнипе ҫĕнтерме ҫук.

Ҫĕр ҫине ансан вĕсене кашни йывăҫ тĕмĕ вилĕм кӳрет. Тӳрех калас пулать, вăрă-хурахла ҫар нихҫан та ҫĕнтерме пултараймасть.

Ҫанлĕ пурнăҫа ҫирĕплетес тесен, пирĕн кашнинех хăйне шанса панă вырăнта пĕтĕм вăя хурса ĕҫлемелле, хамăрăн Тăван ҫĕршывăн вăй-хăватне ҫирĕплетмелле,— тесе вĕҫлерĕ хăй сăмахне Виноградов юлташ.

Ҫолхоз лашисене пăхакансем пурте унпа килĕшрĕҫ, хăйсен ĕҫне яланах лайăх тата тĕплĕн туса пыма пулчĕҫ. Ҫакнашкал пысăках мар докладсемпе калаҫусем колхозра час-часахирттереҫҫĕ, калаҫăва ирттерме коммунистсемпе комсомолецсем колхозниксем каннă вăхăтсемпе усă кураҫҫĕ.

* * *

«Дружба» колхоза кăҫал МСА—1100 маркăллă молотилка илсе килнĕ. Ăна хăвăртрах вырнаҫтарса ĕҫе ярассишĕн тăвата колхозник ĕҫлеҫҫĕ. Вĕсен шутĕнче уй-хир бригадирĕ Забродин юлташ та пур. Ҫак вăхăтра итеме «Победа» автомашина ҫитрĕ. Машинăран колхоз председателĕ И. Г. Григорьев тухса молотилкăна мĕнле вырнаҫ-

тарса лартмалли ҫинчен колхозниксене калаш пачӗ. Машинӑна пӗлсе вырнаҫтарсан тата итемри ӗҫе кирлӗ пек йӗркелесен, молотилка пӗр сехетре 300 пӑт тырӑ ҫапса пама пултарни ҫинчен каларӗ.

— Халӗ кашни кун мар, кашни сехет те хаклӑ, ҫавӑнпа та кунне-ҫӗрне пӗлмесӗр ӗҫлеме тивет. Итеме ҫутатас тесен, электричество лампи валли юпасем лартмалла. Вӑл юпасем машинӑсемпе тата лашасемпе ҫӳреме ан чӑрмантарччӑр.

Колхоз председателӗ тырӑ типӗтмелли механизациленӗ сушилкӑри ӗҫе мӗнле йӗркелемелли ҫинчен бригадира каласа ӑнлантарчӗ, ун хыҫҫӑн тулӑ выракансем патнелле ҫул тытрӗ.

Сӑмах майӗн, «Дружба» колхоз председателӗ Григорьев юлташ ҫинчен кӗскен те пулин каласа хӑварас килет. Колхозӑн нумай тӗрлӗ тата кӑткӑс ӗҫне туса пынӑ вӑхӑтрах вӑл заочно институт пӗтерме ӗлкӗрнӗ. Кайра пыракан колхоза малти вырӑна кӑларнӑ. Колхоза пӗлсе ертсе пынӑшӑн правительство ӑна Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗ тата пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илнӗшӗн иртнӗ ҫул Ленин орденӗ парса наградӑланӑ.

Григорьев — ӗҫре ҫитӗннӗ коммунист. Вӑл ӗҫре пухнӑ хӑйӗн опытне тата шкулсенче вӗренсе илнӗ пӗлӗвӗсене колхозниксене каласа пама ӳркенмест. Кунта час-часах кӳршӗри колхозсенчен экскурсие килеҫҫӗ. Нумаях пулмасть колхоз кадрӗсене хатӗрлекен Шупашкарти шкулта вӗренекен 25 колхоз председателӗ ҫак колхозра экскурсире пулчӗҫ. Вӗсене Григорьев юлташ колхозри ӗҫе мӗнле йӗркелени тата колхоз малалла мӗнле ӗҫлеме шутлани ҫинчен каласа пачӗ.

Колхозӑн ӳсӗмӗсем пысӑк, колхозниксен ӗҫлес хастарлӑхӗ ӑнлӑ. Колхозӑн ҫак ҫитӗнӗвӗсем пурте пуҫламӑш парторганизаци пӗлсе ертсе пынинчен, коммунистсем яланах ӗҫе пуҫарса яракансем тата пысӑк пахалӑхпа туса пыракансем пулнинчен килнӗ.

Колхозра 11 коммунист, 46 комсомолец. Ҫак юлташсем пурте колхоз производствинче ӗҫлесе парти тата комсомол членӗн хисеплӗ ятне илме тивӗҫлӗ пулнӑ ҫынсем.

Парторганизаци секретарӗ В. Т. Тимофеев юлташ, иртнӗ пилӗк ҫул каяраххине аса илсе, ҫапла каласа парать:

— Ун чухне колхоз производствинче, уй-хирте ĕçлекен коммунистсем сахалччĕ, нумайăшĕ колхоз правленийĕ таврашĕнче ĕçлеме пăхатчĕç. Паллах, колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе тума кайсан, хăшпĕр чухне вĕсен сăмахĕсем те витĕмлех пулман. Колхозра хуçалăх заведующийĕ пулса ĕçлекен коммунист Яковлев юлташ, колхозниксемпе калаçу иртternĕ хыççăн, колхоз правленине пычĕ те: малалла эпĕ завхоз пулса ĕçлесшĕн мар, манран хăш-пĕрисем «эсĕ сулхăнта ларса нумай пĕлекен пулнă-çке», тесе кулаççĕ, эпĕ уй-хирте колхозниксемпе пĕрле ĕçлеме каятăп, терĕ. Колхоз правленийĕ унăн кăмăлне хапăл туса, ăна колхозниксемпе пĕрле ĕçлеме ячĕ. Бригадирсем те ун чухне уй-хире кайса мĕн тумаллине кăтартатчĕç те яла таврăнатчĕç. Бригадир Николаев коммунист пуçарнипе, вĕсем те колхозниксемпе ирten пуçласа каçчен уй-хирте ĕçлеме тытăнчĕç. Коммунистсем Федотовпа Павлова юлташсем тата эпĕ хам та колхозниксемпе пĕрле ĕçлеме уя кайрăмăр. Уй-хирте эпир пахалăх енчен те, хисеп енчен те малти рете тухрăмăр. Вăйлă тырпулшăн кĕрешӳ тивĕçлĕ пек пуçланнине кашни колхозник туйса илчĕ.

Акă тепĕр тĕслĕх. Çуркунне. Çĕр типсе çитмен-ха, уй-хире урапапа тухма çук. Çак вăхăтра ыраш калчине минерал удобрени памалла тата клевер акмалла. 900 центнер минерал удобрение эпир юланутпа хире кăларса ыраш калчине апатлантартăмăр, курăк вăрлăхне те юланутпах акрăмăр. Çак ĕçре коммунистсемпе комсомолецсем пример кăтартса пачĕç.

Хăш-пĕр колхозниксем пиртен: «Мĕнле çавăн пек асапланатăр, тата тепĕр икĕ кун кĕтме май çук-им», тесе ыйтатчĕç.

— Эпир парти организацийĕ тата колхоз правленийĕ хушнине тăватпăр, вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешетпĕр,— тесе ответлеттĕмĕр. Вăйлă тырпулшăн кĕрешни — асапланни мар, вăл хисеплĕ ĕç пулнни çинчен ăнлантарса параттăмăр. Часах пирĕнтен кулакан уйрăм колхозниксем те пирĕнпе пĕрле пикенсе ĕçлеме пуçларĕç.

Комсомолецсем те чаплă çитĕнӳсем турĕç. М. И. Ивановăпа М. В. Викторова юлташсем 1947 çулта пĕр гектар çине çĕрулми лартса çитĕнтерме обязательство илчĕç. Вĕсем кашни çĕрулми аварне шута илнĕччĕ, кашнинех апатлантаратчĕç, çум курăкĕсенчен тасатса тăратчĕç, икĕвиçĕ хут купаларĕç. Çакăн пек ĕçлени сая каймарĕ: пĕр



Лектор С. В. Венедиктов юлташ „Дружба“ колхозра Корейӑри лару-тӑру ҫинчен лекци ирттерет.

гектартан вĕсем 2856 пăт çĕрулми пухса кĕртрĕç. Çав çулах Викторова юлташ пĕр гектар çинчен 162 пăт тулă туса илчĕ. Çаксем вара пикенсе, агротехникăна пурнăçласа ĕçлесен, пирĕн уй-хиртен те вăйлă тырпул туса илме май пуррине ĕçре кăтартса пачĕç. Ивановăпа Викторова юлташсене вăйлă тырпулшăн пĕтĕм вăя хурса ĕçленĕшĕн ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ Хисеп грамотисем тата хаклă парнесем парса награδăларĕ.

1948 çулта вăйлă тырпул туса илнĕшĕн СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, М. Иванова, К. Николаев, В. Сидорова, Р. Шашкова юлташсем Ленин орденĕ илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Культурăллă-массăллă тата политикăллă ĕçе эпир яланах пысăк вырăна хунă. Пирĕн хăш-пĕр уйсем ялтан инçерех. Унта ĕçлекен чылай колхозниксем хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче уйрах çĕр выртаççĕ. Парторганизаци çакна шута илчĕ. Инçетри уйра ĕçлекен бригадăсем валли куçса çӳрекен хĕрлĕ кĕтес турĕ. Унта радиоприемник, библиотека, колхозниксен канăвне культурăллă организацилеме кирлĕ ытти япаласем те пурччĕ. Çак куçса çӳрекен хĕрлĕ кĕтесре ĕçлеме ялти клуб заведующийĕ Н. Иванов хăй çине илчĕ.

Пирĕн колхозра радиоузел пур, кашни колхозник килнех радио кĕртнĕ. Çураки вăхăтĕнче те, тырпул пухса кĕртнĕ чухне те эпир радиопа анлăн усă куратпăр, колхоз агрономĕ Г. И. Иванов, колхоз председателĕ И. Г. Григорьев клубра кăна мар, радио тăрăх та часчасах лекцисемпе докладсем вулаççĕ. Эпир радио тăрăх çакăн пек лекцисем патăмăр: «Кĕрхи тырă калчине çуркунне пăхасси», «Вăрлăх акмалли нормăсем», «Çум курăкĕсен сиенлĕхĕ», «Выльăх апачĕ хатĕрлесси», «Тырпула вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртессишĕн», «Государствăна чи лайăх тырă тата срокчен парса татассишĕн кĕрешер» т. ыт. те.

Иртнĕ çул эпир татах та пысăк тухăçлă тырпул туса илтĕмĕр. Вăйлă тырпул мастерĕсем пирĕн колхозра халĕ 27 çын шутланаççĕ. Вĕсенчен иккĕшĕ Социализмла Ĕç Геройĕ ятне илнĕ, ыттисем орденсемпе медальсем илме тивĕçлĕ пулчĕç. Халĕ эпир вăйлă тырпул туса илекенсен ĕç опытне тата ял хуçалăх наукин çитĕнĕвĕсене вĕренетпĕр. Пирĕн пата та кӳршĕри колхозсенчен вĕренме килеççĕ.

Кăçал кăна пирĕн патăмăрта 7 колхозран экскурсире пулчĕç. Колхоз председателĕ И. Г. Григорьев юлташ тата Социализмла Ĕç Геройĕсем К. Н. Николаевпа В. С. Григорьева юлташсем экскурсие килнĕ юлташсене хăйсен ĕç опычĕ çинчен лекцисем вуласа параççĕ. Çак кунсенчех эпир хамăрпа кӳршĕллĕ «Заря» колхоза тата ытти колхозсене те кайса колхозниксен пухăвĕнче колхозниксемпе тĕл пулса хамăрăн ĕç опычĕ çинчен каласа пама шут турăмăр. Çак ĕç çинчен «Заря» колхоз правленийĕпе каласса татăлтăмăр.

Пирĕн колхозниксен çитĕнĕвĕ вăл — коммунистсем пур ĕçе те тĕплĕн сӳтсе явнинчен тата производствăра хăйсем яланах малта пырса пример кăтартса пынинчен килнĕ тата килет те,—вĕçлерĕ хăйĕн калавне колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ Василий Тимофеевич Тимофеев, вăйлă тырпул туса илнĕшĕн Ĕçлĕх Хĕрлĕ ялав орденĕ илнĕскер.

**В. Акгель.**

## ҪУЛЬТУРАЛЛĂ ПУРНĂҪ ХРОНИКИ

Чупай ял Советне кĕрекен Паттири «Заря» колхозра ҫак кунсенче 18 лаша вăйлĕ двигатель лартнă. Колхоз клубне, колхозăн фермисене электричество кĕртнĕ. Кăҫал электричество вăйĕпе авăн ҫапаҫҫĕ.

* * *

«Заря» колхоз правленине фонически телефон аппаратне лартнă. Телефон колхоз правленине бригадирсемпе тата ферма заведующийĕсемпе ҫыхăнтарать.

* * *

Вăрмар районĕнчи библиотека «Заря» колхозра куҫса ҫӳрекен библиотека организациленĕ. Библиотекăра 100 кĕнеке, вĕсене 10 кунта пĕрре улăштарса тăраҫҫĕ.

* * *

«Дружба» тата «Заря» колхозсен членĕсем йышăннă тăрăх, ялти клубсене юсама колхозниксем хăйсем ҫине илнĕ. Икĕ ялта та августăн 20-мĕшĕ тĕлне клубсене юсаса ҫитернĕ.

* * *

«Заря» колхоз кăҫал ҫуркунне вăрманти ҫырмана пĕвелесе кӳлĕ тунă. Кӳлĕре карп пулă ĕрчетеҫҫĕ.

## Тупмалли

Лекцилле пропагандăна анлăн туса пырар . . . . 3
Çĕнелнĕ ял . . . . . . . . . . . . . 12
Политикăллă-массăллă ĕçĕн результачĕсем . . . . . 21
Политикăллă-массăллă тата культурăллă ĕçе анлăн туса пыратпăр . . . . . . . . . . . . 26
Тырпул — пирĕн государство пуянлăхĕпе тĕрекĕ . . . 31
Эпир миршĕн ĕçлетпĕр . . . . . . . . . 34
Ял хуçалăх пĕлĕвĕсене колхозниксем хушшинче ытларах сарар . . . . . . . . . . . . . 37
Комсомолецсемпе çамрăксен хастарлăхĕ . . . . . 42
Наукăпа çутĕç пĕлĕвĕсене сарасси—пирĕн пархатарлă задача 46
Ялти йĕркелĕх культурăран килет . . . . . . 51
Вăйлă тырпулшăн кĕрешетпĕр . . . . . . . . 54
Клуб — культурăллă центр . . . . . . . . 56
Вăйлă тырпул мастерĕсен ĕçри опытне вĕренетпĕр . . 59
Пирĕн хисеплĕ тивĕç . . . . . . . . . . 62
Пĕр çемьери лекторсем . . . . . . . . . 65
Чупайсем . . . . . . . . . . . . . 67
Культурăллă пурнăç хроники . . . . . . . . 74

Материал подготовлен к печати *В. Ф. Ястребовым.*
Фотоснимки *П. Зайцева* и *Г. Зинькова.*
Редактор *Н. Степанов.*

НТ 05917. Подписано к печати 21/XII-1950 г. Заказ № 2745.
Тираж 2000 экз. Объем 4,75 п. л. Учетно-издательских листов 1,41.
Бумага 82×108/16. Цена 30 коп.

Типография № 1 Чувашполиграфиздата
при Совете Министров Чувашской АССР

Цена 2 руб.

# ОПЫТ РАБОТЫ ЛЕКТОРСКОГО ОБЪЕДИНЕНИЯ при ЧУБАЕВСКОМ СЕЛЬСКОМ КЛУБЕ

на чувашском языке

ЧЕБОКСАРЫ — 1950